К 84.09(=4ч8)
С 89
4-437447

МИХАИЛ СУНТАЛ

# ШУРĂ ЧУЛ

ШУПАШКАР 2011

Национальная библиотека ЧР
4-043747

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К84.09(=Чув
С 89

МИХАИЛ СУНТАЛ

# ШУРĂ ЧУЛ

ШУПАШКАР 2011

ДАРСТВЕНН... ЭКЗ.


М. Сунтала (Желтова)

ББК К84.09(Чув)6-51
С 91

МИХАИЛ СУНТАЛ. Шурă чул. Сăвăсем. – Шупашкар, 2011. – 83 с.

Ку сăвă пуххинче ытларах çутçанталăк тăхрисене çырса кăтартнă. Çуркунне хыççăн çу килет, çу хыççăн кĕркунне... Çак çутçанталăк ылмашăвĕ автор чĕрине пăлхатать, урăхларах тăвать.

Проверено 1 СЕН 2017

И-43747

***

Кăваккăн çӳреççĕ çынсем,
Кăваккăн ларать юман та...
Тул çутăлать кăваккăн,
Кăваккăн килет тĕнче...
Халь тин кăвакки те çитет,
Тĕнче хăйĕнне пĕлет.

***

Пире килсе пулăшасса
Эпир шанса тăратпăр.
Тен, çавăнпа çывăрасла
Эпир пăхса выртатпăр.
Тен, пулăшĕç, чăнах та, акă,
Пире килсе пулăшаççех!
Пӳрт хыçĕнчен тухса, ак, пăхрĕ
Пĕр шурă хурăн хăвăрттăн.
Вăл пулăшать мана, пĕлетĕп...
Ак, чăрăш лартнăччĕ тахçан.
Йĕппи ун симĕс пулĕ...
Вăл пулăшать, пăлăшатех! –
Лăсси ун питĕ ӳснĕ...
Пит нумай енлĕ пулăшу,
Кĕтсен, килсе тухать пуль.
Кĕреççĕ аттепе анне –
Аллисенче хутаç пур.
Ку кучченеç сана валли
Тееççĕ пек пĕр харăс...
Пулăшаççех пуль тетĕп çав!
Эп çавăнпа выртатăп –
Выртап Лапшуç Çтаппан пек!

***

Сассем, сассем, тасти сассем
Манра та пур-тăр халĕ.
Тастан тухассĕ сăмахсем –
Вĕсем халь Турă мар пуль.
Усса пăхатăп кĕлете –
Ак, сасă пулчĕ тăчĕ!
Эп сас тăватăп, эп айван,
Эп сас тума килетĕп...
Сассем, сассем, тасти сассем
Манра та пур-тăр халĕ.
Эп ас илетĕп сăмахсем
Тахсан, тахсан каланисем
Халь те янрассĕ пулĕ...
Хапха сассси, ак, илтĕнет.
Хăна-ши килчĕ пулĕ.
Таста автан та авăтать.
Ак, сас парать пĕр йытă.
Эп сас кăлартăм-ши вара,
Сас кайрĕ тĕнче тăрăх.
Халь тин эпир ку тĕнчепе
Сас кăлараттăр харăс!

* * *

Тастан, шăхăрса, сил пекех
Ман чун сĕн ўте кĕрет.
Таста, тет, сўренĕ пулать,
Халь тин пурăнма килет!
Килех манăн чун, килех!
Эс пурăннă, тет-и, аван.
Эсĕ килсен тепĕр чух
Тен, хăвна ху ас тăван...
Эс пулнă, тет-и, таста,
Тасти аякри сĕршывра.
Эс курнă, тет-и, тата
Пĕр сын куракан асапа...

Асапсăр пулмасть пулĕ çав...
Асамĕ те пур çавăнтах!
Эпир халь тухатпăр санпа
Çак тĕнчепе çапăçма!

* * *

Мĕнле-ха эпир шухăшланă
Пит чаплă, телейлĕ пулма.
Тĕнче мĕнлине пĕлмен мар та,
Çапах та пĕлмен пулмалла...
Черчен чечек пек-и çĕкленнĕ
Ем-ешĕл таса вăрманта.
Усал пуррине пĕлмен те,
Пĕлмен эпир мĕн пуласса...
Ак, вăхăт, ӳссе те çитсессĕн,
Тылларĕ пире уй-хирте.
Епле те аванччĕ, пĕлесчĕ,
Пĕрле пурăнма вăрманта...
Аванччĕ, чăнах та, аванччĕ –
Пыл хурчĕ сĕрлетчĕ пĕрмай.
Мĕн-ма уй-хире тухмаллаччĕ,
Мĕн-ма кăшкăрашнă – тавай!
Тавайне тавай та, пĕлместпĕр,
Пĕлместпĕр эпир пурăнма.
Уй-хир тăрăх эпĕр çӳретпĕр,
Çӳретпĕр эпир аташса...
Аванччĕ вăрман, аванччĕ,
Пит шăпă тăратчĕ унта.
Унта кăшкăрса калаçманччĕ,
Унта хамăр йышă пулса...
Кунта, уй-хирте, халь курасчĕ...
Мĕн, кам шăм-шакки, тет, кунта!
Шăм-шак хушшинче ман тупасчĕ,
Тупасчĕ хăмăр тăвана!
Çӳрерĕм, çӳрерĕм, çитет пуль,

Çитет пуль тăван шыраса.
Кунта шăм-шаксем темĕн чухлĕ –
Выртасчĕ теп эп çавăнта!

***

Пуçра шухăш çук чухне
Мĕн çинчен, тет, çырмалла.
Çыр ун чух хăвăн çинчен
Ĕмĕрсем ас тумалла.
Çыр, мĕн туйрăн, утнăçем, –
Юрăсем хайланччĕр.
Çыр, мĕнле, чуп тунăçем –
Чĕре ырăланчĕ!..
Çыртăм, çыртăм, чăн та, çыртăм
Хамăн туйăм-сисĕме.
Халь тин эпĕ çын пек пултăм –
Çырнăçемĕн, шухăш кĕчĕ.
Шухăш хăй те туйăмран...
Туйăмран вăл шăтса тухрĕ
Çĕртен тухнă çеçпĕл пек.
Тĕрлĕ-тĕслĕ шухăш çиçрĕ.
Тавтапуç, теп, сăввăма!

***

Çĕр сывлать.
Шыв юхать.
Чарăнмасăр юхать юхан шыв.
Мĕн тума, тет, килсеччĕ кунта.
Ăнланма, хамăра ăнланма...
Пĕчĕкрен чупса иртнĕ çĕрте
Питĕ кăсăклă халĕ пулма.
Çырма тăрăх иртетĕп кулса,
Пĕр кулса та аса илсе...
Ак, кунта пурччĕ вату йăмра,
Кукринче пурччĕ пек пĕр йăва...

Ак, кунта пĕр пĕве...
Ах, мĕн чухлĕ кунта
Эпĕр ларнă картла выляса.
Эп иртетĕп çырма тăршшипе.
Мĕн-ха мĕн, мĕн тени пур кунта
Пĕр чарусăр, пĕр саслă çырма тĕпĕнче.
Эп илтетĕп ача сассине.
Эп илтеп çав сасса...
Çавăнпа эп килеп,
Эп килетĕп хама шырама.
Тĕл пулсан тепĕр чух –
Эп пулатăп ача пек таса!

***

Ача чухнехи нумайччĕ,
Нумайччĕ аса илме.
Кашни пĕр сукмак, тумхахĕ
Аса илтерет пурнăçа.
Кунта, акă, кур, Шашкав сăрчĕ.
Кунтах шак чулла выляса.
Ак, Терентей тĕлĕнче
Кире пуканне вылятся...
Мĕн чухлĕ пуль пулă тытнă
Ача чух çырма тĕпĕнче.
Пĕр шурлă тĕлте çăл куç –
Ĕçсе те мĕн чухлĕ шывне!
Кунтах юнашар пĕрката:
Çырла та кăмпа, сарă мăйăр
Эпир кунта татнă йышпа.
Эпир пурăнман улпутла!
Кашни кун эпир шыранă
Апат-и, темскер, çын валли...
Чул пуртă е мамонт шăмми те
Выртса çав çырма тĕпĕнчех!..
Эпир шав ÿссе пĕчĕкрен

Çырма пек пулса çитиччен...

* * *

Иртеççĕ кунсем хăватлăн,
Темскер, тен, каласшăн вĕсем?
Калаççĕ пуль те – иртместпĕр,
Эпир вĕт шалта, кунсемпе...
Тен, çавăнпа та пĕр сассăр
Иртеççĕ кунсем тени.
Вĕсем иртнине пĕлместпĕр,
Пĕлместпĕр эпир вĕсене!
Иртеççĕ кунсем хăватлăн...
Ăçта-ха тесен, хамăра
Тытса та кăштах пăхатпăр.
Хамăр мĕн туни, япала
Нимех те çукрах çав. Яваплă,
Яваплă эпир ку кунра.
Кун тăршшĕ пит вăрăм пулсан та
Нимех те тумастпăр вара.
Иртеççĕ кунсем хăватлăн.
Иртсе те, тен, кайĕç пулех.
Эпир тăрса юлтăмăр тăлăх.
Çав кунсăр эпир халь!
Ăçта терĕ-ши, куç хывмарĕ,
Пире ас тумарĕ çав кун.
Хăватлăн иртсе çеç кайрĕ –
Анчах çакă кун юлать!

* * *

Иртнĕ çулсен юлашкийĕ
Халь те çук мар чĕрере.
Çавă, кăштах ас тунийĕ,
Татах ăшăтать чунсене.
Пĕчĕк чух, епле, ас тăватни
Ырăччĕ пурте кунта.

Иртрĕç кунсем. Ыратни
Çитрĕ пиççе йăлтах.

* * *

Пĕтсе çитрĕ, пĕтсе çитрĕ
Тенĕ чух таçтан
Сикрĕ тухрĕ те çитерчĕ
Çитменни таран.
Чĕлхе çуккă, ним те çуккă
Эпĕр пĕчченрен.
Ним тума та шут тытманччĕ
Хамăр пĕчĕкрен.
Эх, пĕтетпĕр тенĕ чух та
Тем çĕкленчĕ те
Çырса хутăм ку сăвва та,
Çук, пĕтмен тесе.
Çыртăм, çыртăм, хăвăрт çыртăм
Ахаль лариччен.
Çырнăçемĕн, темĕн куртăм
Телей киличчен.
Килчĕ, килчĕ, телей килчĕ –
Хăй ача пекех.
Тепĕр чух сăвă тени те
Тĕнче тениех!

* * *

Мĕн пулчĕ-ши пирĕн çынпа?
Малтан аванах вăл çӳретчĕ.
Йăлл! куллă йăваш тутапа
Мĕнпур çынсене илĕртетчĕ.
Мĕн пулчĕ, пĕлместпĕр эпир.
Çав кулă çухалчĕ пулас.
Аçта кайса кĕчĕ – тупасчĕ.
Ун чух пулса çитĕпĕр-и, тен?
Пĕр куçĕ йĕрсессĕн те ун

Тути пурпёрех вёт кулатчё.
Пёр çын-и вёсем, анчах
Кашни хăйне уйрăм тăчё.
Аван пурăнасчё тесе-ши,
Эпир тем пётертёмёр халь.
Мён пулчё хальхи чăвашпа,
Ăна халь никам та пёлеймё.
Тен, майёпен ун куççулё
Тупать пуль тута куллине?

***

Халь тин шутлатпăр сан пирки.
Тен, урăхла май та килмен пуль?
Çапах та пурнăç юппине те
Курма пултарнă урăхла та!..
Эп ăнланатăп, май килмен.
Çук, урăхла çулсем пулман та!
Тен, çавăнпа эс халăхна
Вырăс патне илсе каятăн...
Халь тин чăваш тени çукрах пуль...
Шутлаççё пурте вырăсла.
Тен, вырăслах туяççё пулё...
Эх, чун мăнтарăнё, чăваш,
Хăвна эс урăх палăртмарăн.
Вырăс хыççăн кайса, кайса
Кунран кун ертён ёçкёçе...
Çапла пуль çав. Çук урăх çул.
Пире ёçсе пётме пилленё.
Эпир тумастпăр нимён те!..
Анчах таçтан, шалтан çёкленчё –
Çук, ёçкёç мар. Çук, вырăс мар.
Пирён çулсем çёр ёмёр урлă,
Пирён чунсем çёр пёлёт витёр
Шăтса тухаççё тепёр хут...
Ниме пăхмасăр эпёр халё

Тăватпăр Турă пек чуна.
Эпир вĕçетпĕр. Пирĕн çул...
Хур кайăк çулĕ усăлса!
Халь тин эрех ĕçсе лармастпăр,
Усал сăмах та калас çук.
Çук, эпĕр урăх çул тупатпăр –
Чăваш çулне тепре суйлатпăр!

***

Шурă юр витернĕ
Сад пахчи умра.
Хĕллехи хĕвелĕм
Шурă туратра...
Ай, ăçтан тапса тухать?
Ман çавна пĕлесчĕ.
Эп çавна пăхса тăрап
Сад пахчи курман пек.
Мĕншĕн хам та эп курнап
Пĕчĕк ача евĕр...
Чупрăм тухрăм урама
Сад пахчи курмашкăн.
Эп те пултăм сад пахчи...
Юр çути манра пек!

***

Г.Н. Волкова асăнса.

Виçĕ Мишша пур тетчĕ вăл:
Çеçпĕл, Юхма, Сарри.
Ан ярăр тетчĕ ятсене,
Вĕсем вĕт халăх ячĕсем.
Çеçпĕл, ак, халь те çунтарать
Хăй вучĕпе пире.
Юхма та тăчĕ паттăрла –
Вăл та историре.
Пĕр эсĕ çеç Сарри тени,

Нимпех те куранмаран-ха.
Ман халь татах тăвасчĕ-ха,
Тăвасчĕ Хуначи пекрех.
Эсир çĕклерĕр пĕлĕте
Мĕнпур чăваш ятне.
Эпир тем чухлĕ çĕклесен те
Ун чухлĕ çĕклес çук.
Каятăр эсĕр. Виç ята
Манса каймастăр пуль.
Манмастапăр сирĕн ятăра,
Вăл çунĕ çăлтăр пек.

***

Тĕл пултăм эп хĕрачана.
Ун ал-ури те пичĕ-куçĕ
Пит килĕшрĕç мана.
Пĕр пĕтĕмле сăнарĕ унăн –
Хăй пĕр мадонна темелле.
Качча кайман пулсан та, ак,
Хĕрарăмлăхĕ ун – çиçĕмле!
Йăлтăрр! кулать те ку тӳпе
Кăшт йăлтăрать пек, тупата.
Ун кăкăрĕ, ун купарчийĕ
Ах, илĕртеççĕ, Çĕр-Анне.
Хăех килсе пуль çупăрларĕ,
Юрларĕ çепĕç юррине.
Тавах сана, пĕр-ик сăмах
Эп чăтаймастăп халь çырмасăр.
Эс пул хитре хĕвел тепре.
Тĕл пулнă чух ытла чипер эс.
Çунтар ман чĕрене татах
Аса илмелĕх ĕмрипе.
Чуна манне те пулĕ çăмăл.
Мĕн-ма тесен, ку хĕрачан
Çути тухать шалтан. Пĕр тапхăр

Ман ăш-чике вăл ăшăтать,
Татах, татах пурнас килет!

* * *

Ахалех, ахалех вĕт иртет...
Ку самант та, ак, хăвăрт çухалчĕ.
Çук-ха, çук, ку вăхăт тăçта...
Çывхарать, çывхарать те каллех
Çухалать пĕр тăхтав юлманла...
Ахальтен-им, çынсем вăхăта
Укçапа та виççе палăртатчĕç.
Вăхăт вăл укçа çеç-и вара?
Вăхăтра пур темле пĕр пуласлăх.
Ак, унта халь ÿсse хăпарать,
Çын та, тет, çавăнта тупăнать.
Вăхăтра, вырăнта, санпа çеç
Пулса иртрĕ, ку, çак самант.
Халĕ ĕнтĕ мĕн калăн тата?
Халь çитет пуль сăвă çырса...

* * *

Пĕр сăвă пек килет пĕр сас.
Ку, паллă, хĕр утти!
Утса, утса килет те капăр
Иртсе каять пĕр пирĕшти...
Килинччĕ, тетĕп, ман пата.
Кĕтсе сире вĕт эпĕ...
Эп пĕр сасса кĕтеп, кĕтеп...
Анчах вăл иртрĕ пулĕ.
Сăвă пекех пĕр ташласа,
Пĕр юрласа килсессĕн,
Мĕнле пек лайăх пулмалла.
Çапла ман пурăнасчĕ...
Ак, çитрĕ, çитрĕ – çак сасса
Эп ĕмрипех кĕтсечченĕ.

Вăл кĕчĕ манăн пÿлĕме,
Вăл илчĕ манăн чунăма...
Пĕр сăвă пек пурнать çав сас,
Ларать чунра шăнкрав пек.
Тавах сана, çак пурнăçа
Кĕвĕлесе панишĕн.

* * *

Çул çинчен çырасшăн эпĕ –
Çул çинче пĕрмай.
Çул çине тухсассăн эсĕ
Тем те пĕр куран.
Тахçанах утманччĕ эпĕ,
Ура выляtман.
Тепĕр чух, чăнах та, эсĕ
Чупса та пăхман.
Утрăн, утрăн, мĕн вара
Ларас теет-ни?
Утса ывăннă ура
Питĕ лайăх-и?

* * *

Хĕрсем экзаменсем тытаççĕ.
Эх, пĕркеленчĕç пит-куçсем!
Вĕренменни, эх, пĕтерет-çке.
Вуласчĕ те, май çуккă çав!
Ак, ларчĕç, ларчĕç хир чăххи пек
Вĕçсе каяс пекех таçта.
Ăçтаччĕ çав мăшăр çунатăм,
Киле каяс килет, ара!
Анчах экзамен. Кирлĕ пуль çав...
Тытма тăрсан тытатăн-ха.
Пĕр хăрамасăр хĕрупраçĕ
Вакларĕ хăйĕн сăмахне.
Вăл халь пĕлет тĕнче тĕпне,

Унпа вӑл туслашса ҫитет, ак.
Тӗпне ҫитсен, тӗпне ҫитсен,
Тен, пурнӑҫ та татах килет пек.
Ҫапла шутлать ку хӗрупраҫ.
Апла, хир тӑрӑх вӗҫсе пӑх-ха!
Вӗҫнӗ чухне, вӗҫнӗ чухне
Ҫӗнӗ тӳпе те тупӑнать пуль?

* * *

Ӑҫта тӗрӗсси – пӗлместӗп.
Шухӑшлатӑп та утӑм тӑвап.
Эсӗ мӗн, пурнӑҫри ҫавӑ чӑнлӑх
Пур ҫӗрте те пӗр пек терӗн-и?
Вӑхӑт иртӗ, паян чӑн тени
Улшӑнать ӗмӗрсем тӑршшипе.
Уйӑх тухӗ те тӗттӗм тӑхрийӗ
Ҫуталать хӗвелтен иртнӗҫсем.
Тӗрӗсех тенисем, халь мӗн тетӗр,
Тӗрӗсси иртсе кайрӗ каллех.
Чӑнлӑхпа пӗрле халӗ килӗҫ
Суясем те пӗрле – чӑнни пек.
Ахальтен-им каланӑ ку халӑх.
Ку суя – ҫурма пурнӑҫ хӑех!
Ҫавӑнпа та суя килтӗр терӗм.
Суяпа пурӑнма ҫӑмӑлрах.
Эпӗ суйрӑм татах та хама.
Суйрӑм, суйрӑм та – тухрӗ чӑнни.
Чӑнни тӗпӗнче выртать мӗн!
Суи ҫиелте пуль, апла?
Ӑт, ҫапла ку ыйту ҫуралсассӑн,
Эс шыра суя витӗр чӑнни.
Чӑннипе пурӑнсассӑн, чун витӗр
Сӑрхӑнса та тухать ҫын тени.

* * *

Хӗвел урӑхла ҫутататчӗ
Ирпе куҫ уҫса пӑхнӑ чух.
Темле ун, хӗвелӗн хӑвачӗ
Чуна та кӗретчӗ пит шух!
Чӑнах та, пӑхма питӗ хӗрлӗ,
Тӳпе кӑн-кӑвак, таса...
Ах, ман та ҫапла пуласчӗ,
Илесчӗ ҫав чӑн хӑвата.
Эп пӑхрӑм та пӑхрӑм хаваслӑн
Хӗп-хӗрлӗ хӗвел тӗррине.
Мана вӑл те курчӗ, пӗлмерӗм,
Анчах та вӑл ман чӗрере!

* * *

Паян пит хӗвеллӗ кун.
Хӗвел шартарать куҫӑма.
Юр ҫийӗн пӑхма та ҫук,
Илсе вӑл каять аякка.
Юр ҫийӗн утасчӗ татах,
Кӑштах пуҫтарасчӗ ахах.
Ҫук, ҫук, кун пекех хӑвата
Халь тин эс тупаймӑн текех.
Эп утрӑм хӗвел ачилле,
Ҫутатрӑм та пуль тепӗр чух.
Вылярӑм эп юр пӗрчилле.
Хӗл килнӗ чухне – хӗл пек пул!
Хӗл иртӗ часах – кӗтсе тӑр.
Ҫухалӗҫ ҫак хӗл сӑввисем.
Ун чух аса илӗн – ҫапла-тӑр,
Ҫаплаччӗ ҫав сивӗ кунсем.

* * *

Чӑваш ҫинчен ҫырма пуҫлатӑп.
Чӑваш ҫинчен пӗрмай шутлап.
Паянтанпа ман кунӑм-ҫулӑм

Пĕр çав вутпа çеç ялкăшать.
Ак, кĕчĕ пуль пуçа пĕр шухăш.
Мĕн-ма чăваш, тет, вăтанать?
Мĕн-ма тесен хăюллă чунĕ,
Ун чунĕ выраса куçать.
Хăçан ку пулнă, тетĕр-и?
Ку, пулнă Киев вăхчинчех.
Тĕпчес пулать пĕр хăрамасăр
Ку вырăс чĕлхине татах.
Çав вырăсра та упранать пуль
Чăвашăн чунĕ те таçта...
Асамлă пулăм килчĕ мар-и,
Çыратăп эп ку историе!
Вырăс çине пăхса пĕлес-и,
Чăвашăн чăнлă пурнăçне.

* * *

Вăштăр-вăштăр вĕрчĕ ăшă çил.
Ăшшăн-ăшшăн пăхрĕ ăш хĕвел.
Çитрĕ пулĕ Турăсен чăн пилĕ,
Ман чĕре те тăчĕ пуль чĕвен?
Эпĕ куртăм, куртăм чун ăшшиллĕ
Тем çуталчĕ шур юр çутипе.
Çĕрĕпе çанталăк ман çутарчĕ
Тӳпере çухатнă кăмăлне.
Ак, хĕрсем те халĕ юр çунатлăн
Тап-тасан утаççĕ майĕпен.
Мĕн тума, тет, ман çине эс çурăн
Мĕн тума эп курап ку хĕре?
Унăн пичĕ, чăн та, вăштăр çиллĕ,
Унăн куçĕ, чăн, ăш хĕвел.
Çут çанталăк хăй вĕт питĕ пиллĕ
Салататъ чунне юр пек чипер.
Чăн та, чăн та, çут çанталăк панă
Чăн чиперлĕх упранать хĕрте.

Ч-43747

Ăшă çумăр пек, тен, эсĕр çунă,
Чĕвĕлтетнĕ пуль чĕкеç пек тепре.
Çавă тахатсем çитсе пырaççĕ –
Чăваш хĕрĕ тĕл пулчĕ пире!

* * *

Сисетĕп, чунра чĕлтĕртетрĕ
Пĕр эсĕ упранă ачаш.
Çил майăн кăштах вĕлтĕртетрĕ
Хитрен кăна çыхнă шарф.
Таçта пек, чăнах та, упраннă
Çанталăкăн тĕп палли.
Хăватлăн килсе чăлтăртатрĕ,
Пурнатăн-и-ха, тет, туллин...
Пур çав ĕлĕкхи, халь те пур-ха,
Упраннă чăваш чĕринче.
Хитрен вăл пите тапса тухрĕ,
Кăтартрĕ хăйне ĕмĕлккен...
Ачашшăн кăна сас та пачĕ
Хальхи çут çанталăк пекрех.
Пĕр лăпкăн та пĕр хастаррăн
Çапла палăртать вăл хăйне!
Апла, эсĕ кил-ха, тепре çех,
Вара пурăнап эпĕ те!
Сисетĕп, чунра чĕлтĕртетрĕ
Пытаннă пĕр хĕлĕх сасси.
Кам, тет, халь ăна хускатрĕ,
Ăçта, тет, асамлă алли?

* * *

Чун ыратнă чухне васкамасăр эс пыр,
Васкамасăр эс пыр çын патне.
Тен, çав çын та сан пек кăшкăрать чунĕпе.
Эс ăна хăвна илтнĕ пек илт.

Пӗрле пулӑр эсир мӗн пур ӗҫ тӑвиччен,
Тумасан та пӗрле ҫеҫ пулинччӗ!
Ун чухне ҫавӑ йывӑр тӗнче майӗпен,
Майӗпен те татах сывалинччӗ...
Васкамасӑр ҫӳре эс ҫав ҫын умӗнче,
Ун пекех эс пулма кӑштах тӑрӑш.
Ҫынпала пулнӑ чух ху та пулӑн эс ҫын,
Унсӑр мӗн пурӑнни кунта пултӑр.
Тепӗр чух ҫӗкленет чун тени тепӗр хут,
Иккӗн халь эсир тин, иккӗнтен вӑйлӑрах.
Апла, пулӑр пӗрле – ҫӗниччен.
Ҫӗнтерсен хӑвӑра, ҫӗнелет пуль тӗнче,
Тӗнчере пурӑнатпӑр вӗт эпӗр!
Сивӗ ҫил тепӗр чух вӗртӗрех витӗрех,
Чун хытни иртсе кайӗ ҫил евӗр.
Чун хытса ҫитсенех эсӗ пыр ҫын патне,
Ҫын ҫумне пырса тӑр вӑрттӑн-вӑрттӑн.
Ҫын тени вӑй парать. Хӑв, тен, вӑйсӑр пулсан,
Вӑл сана ыталать, вӑл сана ачашлать.
Ачашлать аннӳ евӗр ачашшӑн.
Камӑн чунӗ пӗтет, чун тухать тепӗре –
Ҫын ҫумне пырса тӑтӑн эс халӗ...

* * *

Хӗрупраҫӗ, хӗрупраҫӗ
Пӗчӗк пӑрчӑкан пек.
Ир-ирех тӑрса ҫӳретӗн,
Кӗлт-калт! пӑхкалатӑн.
Акӑ, кӗтӗн, ҫаврӑнатӑн,
Мӗн эсӗ шыратӑн?
Сан чуну та пӑрчӑкан пек,
Кайӑк пек вӗҫесшӗн.
Вӗҫ-ха, вӗҫ эс кайӑк евӗр,
Илсе кай мана та.
Илсе кай мана ҫил майлӑ,

Тек эп таврӑнмастӑп.
Юлтӑр манӑн ас илни те,
Юлтӑр пӑрчӑкан пек.

***

Ҫанталӑк улшӑннӑ чухне
Кӑра ҫилсем пулаҫҫӗ.
Юхха пек хӑвӑрт юхнине
Санӑн курса юласчӗ.
Ах, ҫавӑрттарчӗ пӗр кана.
Пите-куҫа уҫма ҫук!
Хӑҫантанпа кун пек куна
Тытса тӑрать-ха чун?
Эп те кӑра халь ним те мар
Хирӗҫ тӑрса пӑхатӑп.
Хам чунӑмра, хам чунӑмра
Кӑра пулса тӑратӑп.

***

Тӗлӗнтерчӗҫ чӑваш ачисем.
Ҫук, ҫук, ҫук, ӗненместӗп вара...
Вӗсене халь пӗр пус та паман,
Тен, чӑнах та, вӗсем сутӑнман?
Халӗ тин вӗсене питӗ намӑс,
Сысна пек ҫӳреме нӑртлатса.
Халь вӗсем пакша пек питӗ ҫӳлӗ –
Халь тӑраҫҫӗ вӗсем сӑварла.
Ах, анчах, сӑварсем питӗ ҫӳлӗ,
Унта мӗн улӑхать пӗр хӗвел.
Ялкӑшса ахах пек халӗ ҫунчӗҫ,
Нихӑҫан та сӳнми ҫӑлтӑрсем.
Ҫук, ҫук, ҫук, пулас ҫук эп сӑвар,
Эп сӑвар пек пӗр Турӑ мар.
Мана юрӗ чӑваш пек пулсан та.
Тен, каламӗҫ, ку, тункӑс, тесе.

Тен, каламĕç, ку, швайн. Ку, швайн!
Кам çинчен калани паллă мар...
Чăн та, эпĕ чушкă пекех
Курăнатăп сăвар куçĕнче.
Пурпĕр мар-и, эп чушкă пулам!
Пĕрпĕрех чăваша эп сутман!
Килсе тухрĕç пĕр виçĕ «чăваш».
Эх, каларĕç, эпир чăваш мар!
Килĕшместĕп эп ку шухăшпа.
Аттесен чăн ятне пĕтермес.
Эп сана та, анне, пăрахмас.
Эп сире манас çук. Акă, курăр,
Чăн чăваш çĕкленет тепĕр хут.

* * *

Чăлтăртатать тĕнче çутийĕ,
Чăлтăртатаççĕ сар хĕрсем.
Мĕнле чăтать вĕсен чĕрийĕ,
Ăçта вĕçеççĕ чунĕсем?
Кун пек чухне тĕнче уссийĕ
Кăшт пур пекех вĕт туйăнать.
Кĕтмен çĕртен чĕре таппийĕ
Çын илтмеллех вĕт талпăнать.
Çапла, çапла, чăваш упраçĕ
Пĕр вăтанмасăр пурăнать.
Епле халь качча́сем тăраççĕ,
Хĕрупраçсем те вăтанаççĕ...
Чăлтăртатать тĕнче çутийĕ,
Чăлтăртатаççĕ сар хĕрсем.
Мĕнле чăтать каччă чĕрийĕ,
Вăл халь тесессĕн, халь талать!

* * *

Çутă çурхи çанталăк,

Çутă хура турат...
Пулăттăм эпĕ пĕр авăк
Хам та хура курак.
Вĕçĕттĕм эпĕ хаваслăн,
Эп вĕт киле килсе!
Мĕн-ха кунта ман ваннăн,
Куçа курăнать тесе.
Чăн та, пит чаплă йăваччĕ,
Пурччĕ кунта кĕркунне.
Халь çĕнĕрен тăватпăр
Çĕнĕ чĕпсен йăвине.
Курăр, хĕвел пек хаваслăн
Ларĕç чĕпсем пĕр кана.
Çутă çурхи çанталăк
Килĕ чĕпсен сассипе.
Эпĕ те, акă, пĕр авăк
Тăтăм турат хушшипе.

***

Хĕрсем хĕвел пек çутă.
Утти çут шыв юххи.
Пуласчĕ ман пĕр хушă
Çап-çут чечек пуххи.
Юр ирĕлет пит хăвăрт.
Часах, ак, çĕр тухать.
Акă, чечек пĕр вăхăт
Юр айĕн курăнать...
Хĕрсем хĕвел пек çутă.
Шур юрĕ ирĕлет.
Халь тин çерçи те тутă –
Халь çуркунне килет!

***

Мĕн шухăш кăштах палăрать-ха
Хĕр сăнĕ çинче кăштах.

Тен, вăл халь аса илчĕ
Хăй пурнăçне татах?
Акă, вăл пĕчĕк ача-ха,
Чăлтăрр! чупать çаруран.
Ун пек татах та пулĕ,
Пулĕ татах та, ак!
Палăрчĕ куçĕ тăрăх,
Анчĕ юхса пĕр куççуль.
Пулнă-и санăн, тăванăм,
Санăн чуну çакăнта?
Вăл, ас тăватни, пит вăйлă,
Вăйлă ачаччĕ тата...
Акă, куççулĕ витĕр
Кулчĕ туги йăвашскер...
Вăл та пуль халь аса илчĕ,
Пулчĕ, тен, вăл та ясар?
Ку та тем мар-ха. Ку, мĕн вăл?
Пулчĕ чунра темĕскер...
Тен, хĕрупраç аса илчĕ –
Мĕн пуласси паллă мар!
Çав пуласси ялтăртатрĕ
Ярт! кĕлетке тăршшипе...
Мĕн-ха, мĕне аса илчĕ
Çак хĕрупраç сăнĕпе?

***

Кунта питĕ хăтлă.
Ман чун çакăнта.
Кунта тăвансем курăнаççĕ.
Кунтан кайнисем те питех те хăватлăн
Шыраççĕ сана... Мĕн тăван эс кунта!?
Кунта эпĕ килтĕм... Чăваш пур çĕрте
Кăштах калаçатăп йăвашшăн.
Нумай пире вăрçрĕç. Ан вăрçăр пире.

Эпир пурӑнатпӑр чӑваш пек.
Ак, пӗр хӗрупраҫӗ. Ытла та пӗчик!
Анчах та мӗн чухлӗ сӑпайлӑх...
Пуҫне ҫӗклеймесӗр ларать тепӗр чух.
Ун пек чух, пӗлетӗп, пӗтмест вӑл!
Ҫапах та, ак, килчӗ хӑвачӗ те ун.
Вӑл халь хӑйне тытрӗ Нарспи пек.
Хӗрсем хушшинче эпӗ хам та айван.
Айван та, пӗлетӗр, эп паттӑр!
Ак, ҫитрӗм паян иртенпех ҫак ӗҫе.
Кӗтетӗп... Кун килчӗ хаваслӑн.
Студенчӗ килет ҫурхи кун евӗрех,
Ҫурхи кун пекрех вӑл ӗҫлетӗр.
Кӗрлетӗр кунта чӑваш ячӗ татах.
Ниҫта та вӗт урӑх ҫуккӑ!
Ҫак хутлӑх кӑна... Чӑваш факультечӗ!
Вӑл пултӑр кунта кун евӗр.

* * *

Пӑхатӑп та. Тухать кӑштах.
Тем йӑлтӑрать юр айӗн.
Хӗл тӑрӑшшипе пӗтмен пачах.
Кам, тет, шутлӑнӑ сивӗ майлӑ.
Шӑнтса пӑрахрӗ. Хӗл хӑй уттӑн

Килсе кӑтартрӗ хӑй вӑйне.
Анчах та кур-ха, ҫурхи кунра
Калча тухать халь илӗм-тилӗм.
Эх, ялтӑрать ытла та симӗс.
Ытла та илӗртмӗш кусем!
Пӗрре ҫапла ӗне пулса килсе
Татса ҫисе пӑхас-ха терӗм.
Чӑнах та, ак, епле ку ҫимӗҫ,
Хӗл каҫнӑскер, ытла та тутлӑ.
Эй, курӑка ҫисен пулатпӑр тутӑ.

Курăк çисе ÿссе ку таранччен!
Чылай эп пăхса тăтăм савăнса.
Апла, пурнатпăр, терĕм тепĕр хут.
Ку калчапа выльăх çеç мар,
Ку калчапа тăранчĕ манăн чун та.
Çунах, апла, çун юр айĕнче.
Шур юрпалав симĕс калча
Ман чунăма тăваççĕ халĕ.

* * *

Тепĕр çирĕм минут...
Халь ăçта каймалла?
Халь ăçта каймалла, тет, манăн?
Тухса кĕр урама. Туртса яр тепĕр хут.
Туртса яр, çак тĕнче те çунтăр!..
Ун пек мар. Ун пек мар пурăнатăн вĕт-ха!
Парччĕ манăн чуна, çут хĕвелĕм!
Эп пулам-и шур юр? Эп пулам-и шур хут?
Эп çырам-и хама çуркунне пек?
Тепĕр çирĕм минут. Çук, кăштах сахалрах.
Сахалрах кăшт пулсан та хăватлă.
Пĕр минут çеç юлсан та хама çавăнтах
Тепĕр хут хама тăваттăм... Пул эс!
Пул çын пек. Пул эсĕ чăваш!
Ун чухне ним те мар вăл вăхăт.
Ĕмĕре юлнă чун тепĕр хут ас тăвать.
Эп тахçан сăвă пек вĕт пулнă...
Тахçанах эпĕ пулнă пĕр сăвăç кăна.
Ку сăвва эпĕ çырнă авал чух...
Тепĕр юлчĕ çеккунт. Халь тин килчĕ Мишук.
Мишук пек эпĕ халĕ килетĕп.
Ку чăваш пĕчĕкскер. Мĕн тăватăн кунта?
Эпĕ сăвă çырма çеç килсеттĕм.
Эпĕ килтĕм айван. Эп каятăп пуян.
Манăн вăхăтăм çитрĕ паян.

***

Кĕтетĕп вĕт эп... чун илли килессе.
Ăна эс курсассăн, вилетĕн.
Ури хăлхаран, тет, унăн ӳссе.
Ун кăкăрĕ ҫӳллĕ ту евĕр.
Епле эс куратăн, вилетĕн татах.
Миҫе хут ҫапла эп вилсеччĕ!..
Сăмах каласа та ярсан ăнсăртран:
Ку, тухрĕ шыври пек тесеччĕ.
Килет ҫав сасли, ун ячĕ те пур.
Ун ячĕ янрать – чăваш хĕрĕ.
Ҫав хĕр чуна илчĕ, чăнах та, мĕн пур,
Ҫавна пама хатĕр эп, тем те...
Вăл ӳстĕр татах. Ăслăлантăр вара.
Хитре урисем мăнтăрланччĕр!
Вăл чун илли евĕр килет пуль... Кама,
Кампа та пулин тăванлантăр!
Кĕтетĕп вĕт эп... чун илли килессе...
Мана валли мар ку. Ку хĕр
Хăйне валли тупĕ тесе тĕсесе,
Тăратăп пăхса хĕл евĕр.

***

Хĕвел ҫине пăхса ҫыратăп
Хĕвел ҫутиллĕ тĕнчере.
Хĕвел ҫинчен кăна шутлатăп
Эп ҫакă чăрăш тăрринче.
Епле аван вăл халь ҫĕкленчĕ
Ҫак ҫĕр ҫинчен тӳпе таран.
Мана та вăл хăй пек ҫĕклерĕ
Пĕр ҫын таран – чăваш таран!
Паян хĕвел ытла аванччĕ.
Ах, шартаратчĕ чĕрене.
Эп чăрăш пек кун пек тухманччĕ

Çак тĕнчере те çӳреме.
Тавах, хĕвелĕм, эсĕ патăн
Чăн пурăнмалăх пĕр хăват.
Ман чăрăш та тăсса хăварчĕ
Пĕр туратне... Апла, пурнап!

* * *

Пăр каять майĕпен, мĕн ирччен...
Эп тăратăп пăхса пĕччен.
Эх, каясчĕ ларса таçта
Çаврăнса килмиех... Çакăнта
Ача чух пăр çинех вĕт ларса.
Пăр чăтмасть, тайăлать, катăлать.
Çурхи шыв йĕпетет урана.
Тепĕр чух, эх, шыва та ӳкетпĕр,
Чирлеме те пуçлатпăр вара...
Пăр кайни пурпĕрех тыткăнлать,
Тепĕр чух пӳрнене те шăнтать.
Сивĕ пăр, илĕртет вăл татах,
Пăхса тăр-ха пĕччен çĕ пулса.
Пăр каять майĕпен, аякка,
Çаврăнса килес çук каялла.
Кун иртет, тепĕр кун та килет.
Пăр кайни асăмра. Ас илет
Ман чĕре халь çавна.
Ун пекки урăх çук.
Çук, килмест ун пекки тепĕр хут.

* * *

Эп, акă, тăратăп,
Пĕччен эп, пĕччен...
Пĕр кайăк, юлташăм,
Темскер чĕвĕлет.
Чи-чи те чи-чи! тет.
Вăл тем пуль пĕлет.

Ун хăйĕн юрри те,
Вăл тем кĕвĕлет.
Çурхи кун сăввийĕ
Чуна йĕркелет.

***

Чупрăм, чупрăм... Çук, çитеймерĕм
Ача чух чупнă пек пĕр тĕле.
Çав тĕлте вĕт ытла та аванччĕ,
Пурчĕ вĕт пĕр кашличĕ çиме.
Куç çавна вĕт шырать тăранман пек.
Пурчĕ вăл çак тĕлтех, апăрша!
Çук, ўссе пуль кунта ман айванлăх,
Питĕ пысăк иккен вăл халь пурнăçра.
Çук, пулман вăл кунта нихăçан та,
Нихăçан та ўсмен ку тĕлте.
Чĕрене тепĕр хут çунтарсан та,
Тупаймастăн ăна ку тĕлте.

***

Питĕ-питĕ вăрттăн
Вăранать тĕнче.
Эп пăхса тăратăп
Йывăç çумĕнче.
Ун çулçи тухман-ха,
Çеçки çывăрать.
Эс ăна курман-ха,
Курсан, татăн-и?
Питĕ-питĕ вăрттăн
Вăранать тĕнче.
Эпĕ курса тăтăм
Йывăç çумĕнче.

***

А.С. Розова асăнса.

Таçтан илтĕнет ача чунĕ.
Кăлтăр та кăлтăр! кулать.
Янранă чухне таса юнĕ
Çурхи шыв пекех юхать.
Ун юнĕнче пурччĕ пулĕ
Викингăн юнĕ, чăнах.
Эх, вĕт епле унăн сумĕ
Пире пуçтарать татах.
Вăл ÿкеретчĕ сăпайлă
Пĕчĕк ача пек юмах.
Кам-ха çапла сăмах пачĕ:
Эп пурăнатăп татах!
Сан пурăнмалăх пурччĕ
Ӳт-кĕлетке те ăс-тăн.
Сан хулпуççи урлă хучĕ
Хăй аллине Турă шалт!
Çав чăнлăхпа эсĕ пултăн,
Пултăн эс ху та пĕр чăн.
Ах, ачасем тăрса юлчĕç –
Юлчĕç вĕсем те чăлт!
Таçтан илтĕнет ача чунĕ.
Кăлтăр та кăлтăр! кулать.
Янранă чухне таса чунĕ
Турă пекех туйăнать.

* * *

Чăн вăхăтра эпĕ пултăм,
Куртăм ача палли.
Кунтах, ак, ÿсетчĕ хурăн,
Çӳлтех сулланатчĕ вулли...
Халь ĕнтĕ, мĕн тейĕр, юлнă –
Пĕр виçĕ купа чĕрĕ вут.
Эпир кунта ут çулнă –
Çулмалăх, тен, халь те пур!
Акă, вăл пĕчĕк уçланкă,

Пĕр пĕчĕккĕ çеç çавра.
Унта эп ларса кантăм,
Ас илтĕм мĕн пулнă, çавна.
Эпĕр ÿссеччĕ, кунтахчĕ
Пĕр пиллĕк ача – пĕр купа!
Çак уçланках тухатчĕç
Çуркуннепе тата...
Тухасчĕ те халь – пулмасть çав.
Ах, иртрĕç вăхăтсем.
Эпир халь çăпаталлă
Йÿтенĕ ватăсем...
Пахча пек пăхса ларатăп,
Выртать вăл мана валли.
Мунча, ак, хутса яратăп –
Çав пултăр кун палли!

* * *

Ленин атте çуралнă кун
Халь шутласа пăхар-ха...
Парса пире вăл чаплă кун.
Çав кунпала пурнатпăр.
Пулса вăл пирĕншĕн патша.
Патшалăх тунă мар-и?
Халь мĕншĕн-ха пуçа усса
Татах пăхса ларатпăр.
Халь пирĕн çав патшалăха
Таçта çити çĕклесчĕ.
Кашни чăваш çав хутлăхра
Хăйне кăна пĕлесчĕ...
Ун пултăр хăйĕн кил карти,
Унăн чĕлхи те пултăр!..
Хăйне валли те Тур çурти –
Пурин валли те çунтăр!
Мĕн-ма эпир патшалăха
Хамăрăнне туймастпăр.

Ленин атте вăрçать вĕт-ха.
Ун пилĕпе пурнатпăр.

***

Халĕ те чăлтăртатать
Чунра пĕр тĕпренчĕк.
Ах, мĕн-ма-ха савăнать
Манăн чун ача пек.
Вăл вĕт курчĕ, пĕлтĕр-и,
Хĕр ача пĕр пĕрчĕк.
Ах, анчах та ун ури
Чисти пĕр пилеш пек.
Çеçке тухнă пек тăвать
Çав пилеш вуллийĕ.
Ах, пуласчĕ юнашар
Юман пек ачийĕ.
Çук çав, çук. Анчах та-ха
Хускалать тĕпренчĕк.
Хĕрĕн кăкăрĕ тата...
Тен, унта та пĕрчĕк?
Çиттĕр, çиттĕр, çитрĕ-çке
Савăнса тăмашкăн.
Хĕвел, чăн та, тухрĕ-çке
Тепĕр юратмашкăн.

***

Эх, ачасем, эп çыраймастăп
Килте пĕчченçĕ ларнă чух.
Пар эс мана пĕрле пулмалăх,
Пар çак çиле хăть. Пĕр кас, пĕр хуш.
Ху кăмăлна. Вара халь тин
Шăрçаланать пуль пĕчĕк сăвă?
Вăл пулчĕ пулĕ пĕчĕк сад пек,
Вăл илчĕ çут хĕвел тĕсне...
Çавăн чухне кăна йĕркеллĕ

Сăвă тени çуралмалла!..
Ăçта каять, сăвă, пĕлместĕп.
Каять, каять хăй çулĕпе.
Хĕрпе чухне çапла пĕлместĕн
Ăçта каять ку çул тесе,
Пăхса тăмастăн тĕсесе...
Утан, утатăн та тухатăн
Чун ыйтнă çут уçланкăна.
Ăт, çавăнта пурнать хĕвелĕм,
Ăт, çавăнта пур хĕр чĕрçи.
Пуçа хурса выртса канасчĕ,
Çав пултăр сăвăçă тени!
Мĕн сăвăра кăна пулать-и,
Атя пĕрле таçта çити!
Эп çыртăм халĕ. Сăвă пек-и?
Тен, сăвă мар ку? Ху тени!
Çак сăвăпа эпĕ çитетĕп –
Ак, эсĕ ху, тенĕ çĕре.

* * *

Питĕ лăпкă пулчĕ
Тап-таса ирпе.
Мĕн-ха эпĕ илтĕм
Кăвак тӳперен.
Эп вĕçсе çӳрерĕм
Шурă пĕлĕт пек.
Эс çакна пĕлетни,
Пул, эс, пирĕн пек!
Пул-ха, эс, хĕвел пек,
Пул-ха çил вĕçни.
Ун чухне чĕреçĕм
Пулĕ Тур палли!
Ах, пурнас килет-çке
Сăвă çырнă чух.
Тепĕр чух тухасчĕ

Пĕчĕк çеç сада.
Унта пурте пурччĕ,
Пурччĕ эс унта.
Халь ăçта каятăн?
Юл-ха сăвăра!

* * *

Хĕрсем çитсе пыраççĕ...
Хĕрсем пулсан эс пур.
Çавă хĕрсем пулсассăн,
Чăнах та, пурнăç пур!
Ак, çитрĕ чун хавалĕ,
Таçта тем чĕтренет.
Тен, авалхи сăмахăм
Тухасшăн чӳхенет?
Каласчĕ, тетĕп, эп те
Асамлă сăмаха.
Ун вырăнне, эс кур-ха,
Калатăп урăхла.
Хĕрсем килсе çитсессĕн,
Ман пурнăç пуçланать.
Вĕсенĕн ăсĕ пур-ха.
Çав ăс – çак сăмахра!
Кала, кала-ха, тетĕп,
Кала çав сăмаха!
Çав сăмаха пĕлсессĕн,
Хĕр те пулать – çăтмах.
Çăтмах тесе кĕтетĕп
Эп çакă хĕрсене.
Чăнах та, чăваш хĕрĕ,
Чăнах, чăнах çăтмах!

* * *

Выртса юлчĕç купасем...
Пит хитре-çке-ха вĕсем.

Пĕлтĕрхи çул сулçăллă,
Пурăнмашкăн усăмлă...
Пăхса тăтăм... Купасем –
Темĕн чухлĕ çулçăсем.
Эх, такам çырса хăварнă
Çыру пĕтрĕ майĕпен.
Хĕл каçсан çапла çав вăл.
Çулçă хуралать, пĕтет...
Манăн чун та çĕтĕлет.
Мĕн-ха, мĕншĕн-ха пуçтарнă
Çакă çулçăна ирпе?
Çĕр-шыва каллех тустарнă
Çаратса хăварнă пек...
Чăн та, ĕнтĕ тирпей пек,
Кĕртнĕ пек туятăн-ха.
Ах, анчах мĕн чул сиен
Йывăçсăн çу тăрăшшĕпе.
Мĕн-ха çимелле тет-ха?
Выртса юлчĕç купасем
Ман чунри суран пекех,
Ыратаççĕ пек вĕсем.
Амăш ачисемсĕр пек,
Ачисем те пĕтрĕç пек...

***

Çын мĕнлине пĕлес тесен,
Пырса эс кĕр çын хушшине.
Енчен те вăл сана итлерĕ,
Пĕр-ик сăмах хушса каларĕ.
Ку çын-мĕн аптрамасть теме
Пултарăн кăшт асăрханса....
Анчах та вăл кăшт шăртланса,
Илет пăхса сив куçĕпе.
Ку, паллă. Эсĕ кирлĕ мар.
Эс ахалех хушша кĕрен.

Сана кёртмерёç? Хушшăрта
Чупса çӳрет кушак кăна.
Епле аван тепёр чухне
Сана та йышăнсан. Пёрле
Шутлатăн çын пекех. Вара...
Эс çын пулса тăратăн та!
Хушша кёрсен те ним те мар!
Сана никам та вăрçас çук.
Эс çын пекех. Эсё пёр тан!
Анчах, чăнах та, апăрши,
Ку мён тума та кирлё-ши?
Мана никам та вёт чёнмен.
Эп хам пёччен те – пёччен мар.
Тен, çавăнпа эп кирлё мар!

* * *

Эп сăвă мённе пёлмерём,
Эп çыртăм та çыртăм темскер.
Малтан мён чёре каларё,
Кайран çирёплетрё ăс-тăн.
Пёрех нимёнех те пулмарё,
Пёрех вёт пётмерё тухса...
Мён-ма тесенех эс сисетён
Темле питё вăрттăн кунта.
Кунта темле вăрттăнлăх пур-тăр,
Эпир пёлменле япала...
Сăмах çумне килчё сăмах-тăк,
Апла, сăвă, тет, пулмалла!
Анчах та кунта пуç çапни пур,
Сăвва сăвăлатăн пулсан.
Эс кăшт кăна мар çапса пăх.
Вара уçăлать, тен, çул...
Эп çыртăм та çыртăм пёр вёçсёр,
Кётмерём çула уçасса...
Ман пурнăç пёр майлă çул-тăр.

Унпах манăн халь утмалла.
Чăнах та, ак, утрăм та тухрĕ
Çап-çутă çавра япала.
Ку сăвă тени хăй-ши пулчĕ,
Е пулчĕ Тур панă сăмах?
Утсам, апла, эсĕ татах та.
Çул, утнăçем, уçăлать. Сăмах та,
Сăмах та килет, çырнăçем!
Эп сăвă мĕнне пĕлмерĕм,
Çыртăм та çыртăм темскер.

* * *

Эп вĕçеп, эп вĕçеп кайăк пек
Çак ĕçе Турă пулăшнă май.
Ах, анчах халь пăрахрăн утма,
Ярăнса çеç каятăн вĕçсе.
Вĕç-ха, вĕç, кайăк пек-и унта,
Эс çӳлтен пăхса ирт кайăк пек.
Çырмара халь пуçланчĕ серте,
Пур унтах темĕн тĕрлĕ чечек.
Эс вĕçен, эс вĕçен кайăк пек.
Эс куран та пуль-ха вĕсене...
Ах, анчах çав чечек шăршисем,
Çырмари çав ирхи сиввисем
Йăлт çухалчĕç пулас пурнăçран.
Ах, татасчĕ халь сиплĕ серте,
Татмасан та шăршласчĕ чечек.
Çук, ун пек эпĕ тин тăваймас...
Эп вĕçеп, эп вĕçеп... кайăк пек!

* * *

Çитет те пулĕ пурăнса,
Чаксах пырать ман кун.
Çапах та эпĕ тăрăшса,
Йывăç лартатăп-ха.

Йывăç лартап та ас илеп
Чăваш чĕлхи кунне.
Йывăç лартатăп-ха тесе,
Эп каяймарăм ун чухне.
Чăнах та, килĕ, ак, уяв –
Йывăç кашлать хăй май.
Ун çулçисем чĕлхеллĕ çав,
Сас кăларать пĕрмай.
Чăваш чĕлхи уявĕ ман
Ку пахчара та пур.
Сиренлĕ, ак, аллея та...
Утса çӳретĕп чух.
Кашла чăваш чĕлхи манра,
Кашла çак йывăç пек.
Манăн чĕлхе çак çут уйра
Çӳретĕр Турă пек.

* * *

Вăрман çуталнă... Кăштахрах
Симĕсленет темскер.
Хăш-пĕр тĕлте серте пурах,
Татсан аванччĕ те...
Анчах ĕçе ман каймалла.
Серте тени тăхтать.
Эпир ăна пĕчĕк чухне,
Пĕчĕк чухнех татса...
Вăрман çуталнă, вăранать
Çĕмĕрт тени кăштах.
Ак, ун çеçки те палăрать –
Шăрши те сăмсарах...
Ах, çав шăрши çĕмĕрт çеçкин
Чĕре патнех çитет.
Çамрăк чухне пĕр пайăрки
Карттус çинче çиçет...
Çути ун питĕ аякра,

Пĕрех çутса килет.
Вăрман çуталнă, тупата,
Çути чуна илет.

* * *

Кăçал эп нимех те сырманччĕ
Ку çуркунне çинчен.
Эп киленме те килменччĕ
Ку уçланка темĕнччен.
Лараттăм тахçан, аванччĕ...
Аванччĕ пĕр кайăк пулма.
Ун сассипе вăранатчĕ,
Ман пĕтнĕ пĕр чун пурăнма.
Кăштах вăранатчĕ çав, пурччĕ...
Пурччĕ манра пĕр хăват.
Çав хăватах уттаратчĕ –
Мана çак уçланкă тавра!
Ак, эпĕ паян аса илтĕм,
Кĕтĕм эп çав уçланка...
Анчах та çитсен эпĕ пĕтрĕм.
Уçланкă та мар пулмалла...
Лармалăх халь сакĕ те çуккă,
Ăçта пăхнă пĕр çӳп-çап...
Пĕр кайăк та... Тен, курнă?
Вăл халь урăхла юрлать!
Ак, эп те кăштах ларкаларăм,
Кăшт пăхрăм та кайăрм утса.
Кунтан темĕскер эп çĕклерĕм.
Пĕлместĕп-ха, мĕн эп йăтса...

* * *

Пĕччен кайăк юрлать пахчара.
Ах, анчах эп ăна итлеместĕп.
Мĕншĕн тетĕр пулсан, пурнăçра
Пĕччен кайăк пекех эп çӳретĕп.

Эс юрла-ха, ман кайӑк, юрла!
Йыхӑрсам мӑшӑрна ир те каҫӑн.
Халӗ тин вӑхӑт ҫук ҫывӑрма.
Ҫуркунне халь иртет шарламасӑр.

Ҫеҫкере халӗ тин чиесем.
Чӗре ҫеҫ итлемест нимӗне те.
Чӗрере халӗ ман куҫҫульсем.
Ку ҫеҫке те ҫапла пӗтет-и?

Пӗччен кайӑк юрлать пахчара.
Ун сасси те кӑштах илтӗнет пуль.
Пурпӗрех, пурпӗрех пурнӑҫра
Ман телей ӑҫтине вӑл пӗлет пуль.

* * *

Серте ӳсме пуҫланӑ...
Епле ӳсес килет!
Эп ӗлӗкрен пуҫтарнӑ –
Серте илем кӳрет...
Курӑк тавраш та тухнӑ,
Ҫеҫпӗл – ҫеҫкеленет.
Эпӗ ӑна та пухнӑ –
Пылак ҫиес килет!
Эп утрӑм, утрӑм хӑвӑрт
Уҫланкӑ хӗррипе.
Ҫитсе те ӳкрӗм чӑлтӑрт!
Ҫурхи чечексемпе.

* * *

Шыратӑп эп халь... Ӑҫта
Эпир чӑваша ҫухатнӑ?
Чӑваш тенисем таҫта...
Пулман та иккен...

Такам пуль ăна тухатнă?
Чăваш курăнмасть-ха тесе,
Сăвар пек туса кăтартнă.
Ку, паллă. Хальхи вăхăтра
Çын хăвăртрах палăрасшăн.
Анчах та чĕп-чĕр чăвашран
Тахçан пĕтнĕ паттăр пулаймăн.
Пулсан та, чăнах та, чăнах
Пĕрех эс сăвар пулаймастăн!
Тен, çавăнпа та, сыхлавшăн тесе,
Чăваш пек эс ят улăштартăн.
Вара паллаймасть-и усал,
Вара сирĕлет вупăр чулĕ?
Çук, çук, яту мар. Эсĕ ху!
Эс ху улшăнатăн халĕ!
Епле эс чипер. Эс паттăр сăвар!
Яту çеç мĕне тăрать те...
Анчах, чăн яту, чăваш ятласкер,
Выртать мĕн çĕрсе майĕпен.
Эй, çук вара, тейĕпĕр эпĕр.
Чăваш пек пулса ялтăрар!
Кам çук, тет, ун чунĕ, пĕлетĕр,
Ун сăнĕ çын майлă та мар!

* * *

Кун чул пурăнни те çитет.
Кун чул пурăнни та аван вĕт!
Ак, курăр, телейĕм килет.
Ним çук çĕртенех килет вĕт.
Çӳретĕп çĕтсе пушмака,
Кулатăп та пуль тепĕр чух.
Çапах та, ак, çак вăхăта
Нимех те çитесçĕм çук.
Кун чул пурăнни те çитет.
Пире урăх, çук, кирлĕ мар.

* * *

Эп утса пыратăп çĕнĕ пушмакпа.
Эх, епле аван-çке пилĕке авма!
Курăк шăтса тухнă чисти пурçăн пек.
Хĕвелпе ачашлăп эп ăна паян.
Çĕмĕрт çеçке çурнă... Çурнăпа пĕрех.
Эп ăна та татрăм. Шеллемерĕм тек.
Шăршласа пăхатăп... Ача чухнехи
Куç умнех тухать пек. Эх, Тур, апăрша!
Шăршласа тăрсан та... Манăн каймалла.
Çеçкисем çеç юлчĕç. Юлчĕç каялла.
Татах тем те пур пек. Пур пурăнмалли.
Сăвăсем çыраслчĕ. Çакă тĕлĕк пек.
Иртсе кайрĕ пулĕ. Тек килес те çук.

* * *

Çиççе, çиççе çеç илтĕм,
Çеçке, санпа пĕрле.
Телейĕм те вĕт килчĕ,
Ăш çил пекех вĕççе.
Ытла та пит аван-çке
Паянхи кун çапла.
Чăрăш çеçке кăларчĕ –
Апла, пурăнмалла!

* * *

Эс пур та паян. Ыран çуккă.
Мĕн-ма-ха кĕрен хушша?
Унта сан пĕр ĕç пек пурччĕ,
Вăл та пулсан таçта...
Ак, эпĕ тӳрех çуталтăм...
Мĕн-ма, тет, усалланас?
Сана тунă пулччĕр япăх...

Мĕнех – ларас та ҫырас...
Ҫырас чаплă сăвă. Вăл пултăр
Пĕр ҫак шухăшпа ҫурални.
Чăн ҫутăпа ҫуталтăр
Сана та усал туни!

* * *

Ман вăхăт питĕ хаклă.
Пĕр ҫирĕм минут кăна.
Сăвă ҫырса ларас та,
Кайран куҫ курать унта.
Ман вăхăт тени ҫуккă
Уни те куни тума.
Пирĕн кунсем ҫитеҫҫĕ
Лере те лере кайма...
Тен, ҫавăнпа та лăпкăн
Манăн ларма вăхăт ҫук.
Пĕчĕк ача пек вăрттăн
Эп кунсене шутлап.
Эп ҫыртăм, акă, сăвă.
Пĕрех вĕт-ха! Эп – ку!
Эп ку сăвва пĕлетĕп.
Хамах вĕт-ха. Эп – ку!
Ку-ку! та ку-ку! кукларĕ
Вăхăт тени тата.
Ҫут вăрманти куккукăм,
Мĕн чухлĕ шутлăн-ши?
Ман вăхăт питĕ хаклă...
Часах-часах ҫитет!
Ҫитсен те эс мĕн... шутлăн?
Ҫитсессĕн, ку-ку! пулать.

* * *

Эп ыйтрăм – нимех те пĕлмеҫҫĕ.
Пуҫра ҫил кăна. Уҫălма

Часах ушкӑнпа, ак, тухаҫҫӗ...
Тен, калӑн, килет пирӗшти!
Чӑнах та, ытла та хитре-ҫке,
Ытла та пит ӑслӑ хӗрсем.
Теме те вӗсем пӗлеҫҫӗ,
Пӗлмеҫҫӗ кӑна – вӗренме.
Ыйтмасӑр хӗрсем лараҫҫӗ,
Чӗнсен те чӗнмеҫҫӗ – пӗрре те.
Ыйтсан та, ыйтсан параҫҫӗ
Хӑйсен пурнӑҫне юратма.

* * *

Пӗр пӗчӗк галерея.
Чӗлхеҫӗсем йӗркен.
Вӗсем, чӑнах, пӗлсе-тӗр
Чӗлхенӗн техӗмне.
Вӗсем чӗлхе юратнӑ
Темле асамҫӑ пек.
Тута ҫинче ҫуратнӑ
Ҫӗн сӑмаха та, тен?
Вӗсен укҫи пулман-тӑр,
Вӗсен пулман кермен.
Ҫапах та мулӗ мӗнӗ –
Чӗлхе пулни аван!
Чӗлхе пире юратрӗ
Анне пек савӑнса.
Ҫавӑ чӗлхе ҫураттӑр
Пире тата, тата.

* * *

Теме пӗлни пуль кирлӗ,
Сӑвӑ ҫырас тесен.
Ак, пырса ҫапрӗ вирлӗн
Ҫурхи кун ирсерен.
Пыратӑп эпӗ чаплӑн.

Эс ху та çуркунне!
Тен, çавăнпа хăватлăн
Пусан сукмак çине?
Йĕри-тавра асамлăх,
Хура вăрман сывлать.
Юнашарти паланăн
Çеçкийĕ палăрать.
Çеçпĕл тени халь çуккă.
Ун вырăнне вĕлтрен.
Вĕлтрен те питĕ туллă,
Кăшт пĕçерме пĕлсен.
Эп утрăм питĕ çăмăл.
Сăвă тени ăçта?
Сăвă тени ман кăмăл.
Аталанать тата.

* * *

Çеçпĕлсем çуккишĕн кулянмастăп.
Çеçпĕл вырăнне тем пултăрах!
Санпала эп урăх вылямастăп.
Пурнăç манăн – урăхларах...
Эпĕ халĕ вăрттăн сывламастăп,
Сывлăш çуккипе аптăраса.
Анрасах каятăн та... тăратăн,
Çеçпĕле кăштах шыракаласа.
Çеçпĕл çуккă. Çуккă пултăрах!
Эп ăна ытла хыт юратсаччĕ.
Унăн вырăнне халь пултăран.
Эх, апла, ман пултăран татасчĕ!
Пирĕн пурнăç пултăран пек туллă.
Пултăран аван та... çуккăрах.
Атьăр-ха, пĕрле пулса чĕр вутлăн
Çеçпĕле шырар татах...

* * *

Кун пуҫланать ялтравлӑ.
Урам таса тӑрать.
Ҫын евӗр васкаварлӑн
Пилеш ҫеҫке ҫурать.
Ҫумри садсем ҫеҫкеллӗ,
Ҫаран та ешерет.
Манӑн килте пит меллӗ
Пӗр улмуҫҫи ӳсет.
Ӑна ман пит курасчӗ...
Мӗнле ҫеҫкеленет!..
Унпа пӗрле хъаваслӑн
Ман пурӑнас килет.
Киле, киле каясчӗ,
Унтах ман чун выртать.
Сана кӑшт чуп тӑвасчӗ...
Вара, ман чун тулать.

***

Ҫавтӑнса та пыма пит аван.
Хӗрупраҫӑм, тӑрсам юнашар!
Утса каййӑпӑр эпӗр... Ун чух
Чӗреме сана ҫеҫ-и парам?..
Пур ман кӑмӑл... Ҫунать хӗвелле...
Эп унпа вӗт сана килтереп.
Хӗрупраҫӑм, килсем чечекле.
Чечеке те тупсан каҫсерен,
Эх, аван пуль ҫапла ҫавтӑнма.
Чӗре ҫеҫ илтӗнет... Пур таппи.
Чӗресем пӗр пекле ывтӑнсан,
Пурӑнма та пулать вара.

***

Ҫеҫке ҫурать.
Ҫурать пек ку тӗнче
Чӑвашӑн чӗрине хӑватлӑн.

Таҫта илсе каяҫҫӗ пек пире!
Чӗре ҫунать.
Ҫунать пек ку тӗнче.
Ку тӗнчепе пӗрле килетпӗр те!
Ҫак тӗнчепе пӗрпекленсе,
Пулатпӑр ҫын. Ҫын пекех хитре.
Вара, тен, ҫитрӗ пурӑнса пире!

* * *

Ҫу ҫитрӗ пуль. Кунсем ялтравлӑ.
Юрлакаласҫӗ сар хӗрсем.
Ҫапах та, иглӗр-ха, уявлӑн
Шӑхӑркаласҫӗ шӑпчӑксем.
Куккук та авӑтать шутлавлӑн,
Ҫиҫеҫҫӗ хурӑн ҫеҫкисем.
Пилеш тесен, пилеш юравлӑн
Ак, курӑнать пиҫсе ҫитсен.
Ҫу ҫитрӗ... Эпӗр пурӑнатпӑр.
Эпир халь хамӑр ҫеҫкесем.
Пуҫа пӗксе, пӗксех тӑратпӑр,
Юратупа ҫӗкленнисем...

* * *

Пӗрремӗш куккук асамлӑ.
Асамлӑ пекех авӑтать.
Куккук сассипе тӑванлӑн
Шӑпчӑк та кӑштах шӑхӑрать.
Ах, тур, чӑплатать те хӑватлӑн
Темскер ман чунра вӑранать.
Куккук куккуклать пӗр вӗҫсӗр,
Апла, пурӑнатпӑр эпир те...
Аван-ҫке ҫапла, тӑванӑм,
Пӗрле уҫӑлса ҫӳреме.
Пулсам ман ҫумра пӗр ӗмӗр.
Тин ҫеҫ ҫуралать-ҫке тӗнче!

Чăваш пек сывла асаплăн
Тĕнче асамланă чухне.
Эпир те кунтан кайсассăн,
Мĕн пулĕ-ши тепринче?

* * *

Пилеш çеçкине тăкнă.
Апла, çу иртсе пуль пырать.
Ирхи çил кăштах, ак, сулхăн.
Кăнтăрлапа та ăшăтмасть.
Халь ĕнтĕ... Халь пурте ÿснĕ.
Кашличĕ куç умĕнчех!
Мĕн-ма эсĕ халĕ тÿсрĕн –
Çеçке тăкнă пилеш евĕрех?
Çеçкийĕ ытла тутлă шăршлă
Саратчĕ сим-пыл таврара...
Халь унăн пин-пин пĕрчĕк,
Çеçке вырăнне тухмалла.
Тен, сан та çитсе савăк вăхăт,
Тен, сан та пилеш пулмалла?
Анчах ун пек питĕ хăвăрт
Çеçке тăкаймастăн вара...

* * *

Пĕр сăвă та урăх çуккă.
Тухмасть пĕр сăмах та ăшран.
Мĕнле çуркунне ку пулчĕ,
Мĕн килчĕ мана ку кунран
Ун чунĕ те пур вĕт, пĕлетĕп.
Юрлать шăпчăксем вăрманта.
Ăна итлеме эп килетĕп
Сăвва та çырман вăхăтра.
Таçтан вара тем сăрхăнать пек,
Кĕрет шăпчăкпа чун тени.
Çапах та таçта пурăнать çав,

Çав манăн та чун пекки.
Тен, вăл кайăк пек иленнĕ
Пĕр пĕчĕк çавра йăвана...
Унта вăл ирпе те кĕтнĕ
Эп сăвă кунта çырасса.
Сăвви вăл, чăнах та, пĕр юрă.
Унпа тăвайратни хăвна?
Çак шăпчăк пекех юрласассăн,
Тухать чун тени сăвăра.

* * *

Мĕн-ма эсĕ питĕ ачашшăн
Пăхатăн халь ман çине?
Шутлатним, ку тарчĕ,
Ку тарчĕ таçти тÿпене.
Унта вăл пĕр сăвă çырать пуль
Пĕр ман, пĕр ачаш сăн çинчен.
Ун чунĕ те халь тухать пуль,
Тухать пуль шур хут çине...
Сăмахĕ кăштах çитмесессĕн,
Хушса та парас-и сана?
Тута та ман, куç, ман сăн та
Курнаççĕ пуль ку сăвăра?
Ку пурнăç тени пит усал çав,
Памарĕ пире юратма.
Ак, шăпчăк та, тен, ас илесшĕн
Тахçан пулнине юрăра...
Сан сас та çав шăпчăк пекрех пуль,
Темскер пек калать ăшунта.
Ан кай та, ан кай чаплаттарчĕ
Пĕр шăпчăк, чăнах, вăрманта.

* * *

Вăрттăн, темле юхан шыв пек
Иртрĕ ман пурнăç пĕччен.

Юрать сăввăмсем пулчĕç –
Çавсем сыхăнтарчĕç-и, тен?
Çавсем сыхăнтарчĕç пуль, тетĕп,
Çак çутă янравлă кунпа.
Унта та, сисеп, питĕ шăппăн
Калаççĕ темскер мана.
Эс, хурлăхлă чунăм, теес пек
Тасти чăтлăхри кайăксем.
Татах пурăнма пĕлесчĕ
Тасла та юхан çак шыв пек.
Эс, юх, шăппăн çех, питĕ вăрттăн.
Кĕрсе те куран, тен, хăвна?
Çук, çук, халĕ тин пĕччен мар-тăр,
Сан сăвă тени халь çумра.

* * *

Кун ăшăтать...
Каллех вĕреççĕ
Ăшă çилсем
Çак çул çине...
Мĕн-ма тесен,
Çак çулсем тăрăх
Эпир çӳретпĕр пулмалла...
Малтан, тен, сивĕрех те пулчĕ.
Анчах та утнăçем тата
Хĕвел тени те хăвăрт тухрĕ.
Ăш çил çĕкленчĕ çавăнпа.
Кун ăшăтать...
Каллех вĕреççĕ
Ăшă çилсем сулсем çине...
Пире вĕсем илсе каяççĕ
Хамăр патне, хамăр патне...
Апла пулсан, вĕрех, эс, çилĕм!
Çилсем тени пит япăх мар!
Ăш çил вĕрсен, вара шутлатăн,

Савни алли çапла пулех
Сана кăшт сĕртĕнет ачашшăн.
Таçта санпа темскер тăваслăн,
Çак çул тени – авкаланать!

***

Паян чăвашăн çимĕк кунĕ.
Эс çимĕç çисе пăх!
Ун чух, пĕлетĕн, пулĕ
Чăваш та Турă пек...
Ах, Турăçăм, Турă, Турă...
Пăхмарăн пулать чăваша?
Паян çимĕк кунĕ çутатрĕ,
Çутатрĕ ку тĕнчене!
Паян эпĕ, чăн, мунча кĕрĕп,
Паян эпĕ çимĕç çиеп...
Кунта темĕн тĕрлĕ курăк,
Кунтах, акă, пур пултăран.
Тăраннă пекех пулчĕ мар-и?
Пултарчĕ пултран пурнăçа.
Пĕр пĕчĕк ача пек тăратăп
Татах та тут курнăран...
Паян аслă çимĕк кунĕ,
Паян ешерет, тет, тĕнче.
Мĕн-ма тесенех, чăваш чунĕ
Çакă тĕнче пек пулать.

***

Савăнса çӳретĕп
Пĕчĕк çеç садра.
Кунта тем те пур пек,
Пур кунта – çăтмах.
Акă, чăрăш ӳснĕ.
Акă, пур пилеш.
Кунта тем те пур-тăр –

Кунта эс те пур!
Усăлса сÿретĕп
Эп усланкăра.
Кайăксен юррийĕ
Хăй усать чуна.
Усăлтăр-ха, усăл
Чун тени кунта.
Хамăнпа эп пултăм
Пĕчĕк сес садра.

* * *

Су килсе ситрĕ. Тăванлăн
Туятăн темле хăвна...
Сак юмана ыталаслăн
Кăмăл тухать тастан.
Сумра шĕшкĕсем сип-симĕс,
Ытла шерепеллĕ тата.
Су хуса ситрĕ пулĕ?
Ку вăрманта та аван!
Кăткă та, ак, чупса иртрĕ.
Ах, тур, епле чупкалать!
Мĕн ку, мĕнех-ха ку, тетĕн.
Вăл вĕт мана та курать.
Пĕр НЛО пек иртрĕм
Эпĕ юман сумĕпе.
Шĕшкĕ кăштах алă сулчĕ,
Кăткă юлать тĕлĕнсе...

* * *

Чĕлхе синчен эпир сыратпăр.
Чĕлхе, чĕлхе, чĕлхе...
Чĕлхе пулсан, эпир сывлатпăр
Тура пекех пĕрре.
Анчах та, сук, пĕлместпĕр,
Эпир чĕлхе мĕнне.

Чӗлхе пӗлсен, килетпӗр
Тӗнче кӗвӗлеме.
Тӗнче пӗтет, пӗлетр-и,
Чӗлхе пӗлменнӗрен...
Эп чӗлхене пӗлсен-и,
Тӗнче тӑвап кӑна...
Чӗлхе, чӗлхе, чӗлхеҫӗм,
Ӑҫта ҫухалтӑн эс?
Эп чӗлхене пӗлес пек
Сӑвӑ ҫырап кӑштах!

***

Эпир пурнатпӑр, чӑн та,
Сисмесӗр хамӑра.
Эс мӗн туса пурнан-ха,
Сӑну ӑҫта тата?
Пӗр сӑнсӑр, шухӑшсӑр пулса:
Апат тупсан аван!
Ҫапла-ши кӑшт шутланӑ, –
Пӗрех пулса тӑван!
Ак, тен, таҫтан вӑранчӗ
Пӗр шухӑш: Эс кам пулан?
Эс пултӑн чӑваш евӗр,
Е пултӑн пӗр тутар?
Халь ҫитрӗ пуль вӑхӑт пӗтмелӗх,
Е ҫитрӗ пире ҫунма...
Ӑшра авалхи вут ҫунать пек,
Чӑваш та кӑштах вӑранать.
Ҫук, ҫук, халӗ вӑл пӗтес мар, тет.
Мӗн-ма, тет, манӑн халь пӗтмелле?
Тухать сар хӗвел питӗ чаплӑ,
Чӑвашшӑн пӑхать уйӑх...
Мӗн-ма, тет, ку шӑпчӑк шӑплантӑр,
Чап-чап! текелет чӑвашла.
Чӑнах та, мӗн пурӗ ҫанталӑк,

Халь хӑй пурӑнать чӑвашла.
Апла-тӑк, апла, пурӑнас-ха,
Пурнас-ха халь ман чӑвашла!
Мӗн-ма тесенех, калар-ха:
Пурнать халь чӑваш шӑпчӑкла!

* * *

Юхса тухать ман чунӑм
Ҫак хурӑн шывӗ пек.
Ӑна ӗҫсе те тупрӑм,
Мӗнле вӑл – ҫак тӗнче.
Чупса пыратӑп хӑвӑрт
Темскер тӑвас пекех.
Эпӗ килсессӗн чӑпӑрт!
Кам чуп туса илет?
Ҫапла, ҫапла, ҫапла ҫав,
Шӑпчӑк та чуп тӑвать.
Ҫавӑн чухне ман чун та
Сана пек ас тӑвать.
Ун чух аван, аванччӗ,
Ҫапла чупса пыма.
Пӗр шӑпчӑк та калатчӗ
Хӑй кӗввине кӑна.
Халь пӗтрӗ-ши ман чунӑм,
Юхмасть хурӑн шывви.
Шӑпчӑкӗсем те кайрӗҫ.
Тухмасть вӗсен юрри.
Ҫапах та парӑнмастӑп.
Эп те тута тӑвап.
Шӑпчӑк пекех ларатӑп, –
Шӑпчӑк пек шӑп ларап!

* * *

Пӗр ҫырма пуҫласассӑн, тӑванӑм,
Тем ҫинчен те ҫырма пулать.

Ак, тĕл пулчĕ пĕр пĕлĕш, куратăн,
Ху та пултăн эс çын пекрех.
Ах, чуну савăнать, курса тăр-ха,
Эс те вĕт пĕр ача пек кăна.
Мĕншĕн-ха, халĕ тин ватăлсан та
Пăрахмастăн çынпа савăнма?
Чăн та, чăн, ах, чĕре питĕ чаплă, –
Тус-юлташшăн епле савăнать!
Тĕнчере халь çынсем пит нумай та –
Никама та эпир хирĕç мар!
Тĕл пулма, калаçма, савăнма та
Питĕ лайăх пулать чăнласах.
Пире халĕ нимех кирлĕ мар та,
Тĕл пулмасăр май çук пурăнма.
Тĕл пулсан, хутшăнсан çын пулап-ха.
Акă, мĕншĕн ман чун ыратать!
Кил-ха, кил, ман çума, савнă тусăм.
Эс пулсассăн çумра – çын пулап!

* * *

Пĕрре хĕвел пек курăнчĕ
Хăй çеç юрланă чух.
Тепре уй тăрăх шăвăнчĕ
Уйăх çути пекрех.
Мĕнле çынсем, чăнах та,
Пĕр курăнĕç, çĕтĕç...
Çапах, темле пĕтсен те
Вĕсем те çутатаççĕ.
Эп те çапла пурнасшăн,
Ман та пĕтес килмест.
Чăнах та, кăшт пĕтсессĕн,
Çутатаймас вĕт-ха.
Хĕвел пекех тухасчĕ,
Çак çуркунне килсен.
Пит ăшă, питĕ ăшă

Пăхать хĕвел тени.
Апла, пурнăç пулать-ха,
Уйăх пек, эп пĕтмес!

***

Çакăнта вĕт пурăнăç –
Ача ваййи мар.
Эсĕр, тен, шутлатăр,
Ку вăл – ним те мар!
Ним те мар тесен те
Кунта пурнăç пур.
Ачасем выляççĕ,
Хĕрĕсем те пур.
Акă, пĕри туртрĕ
Манăн хăлхаран,
Тепĕри ешерчĕ,
Калăн, пултăран...
Эх, аван-çке вăйă,
Уйрăлми самант.
Вăйăра çеç пурнăç.
Пурнăç – вăйăра!

***

Хурама пек кăштах эс хуралтăн,
Хурланан пулĕ çав, хурланан...
Тахçанах шуррисем те хуралнă,
Хурасем тенĕ пуль çавăнпа.
Эпĕ кайрăм утса, эпĕ кайрăм –
Тĕнчесем хĕррипе манăн çул.
Эпĕ, тен, пăрахса та хăвартăм

Сан çумри Мишшана тепĕр хут.
Халь, тин, çук. Эпĕ урăх пулмастăп.
Тек килместĕп çап-çут çуркуннен.
Куракосем евĕрех кăшкăрмастăп.

Эп хура та пĕрех вĕçеймес!
Аялтан çӳлелле пăхса утрăм.
Эсĕ юлтăн темскер каласа.
Чун темсер илтнĕ пек те пулчĕ.
Эпĕ илтрĕм: ăçта эс каян?
Манăн çул никама курăнмасть-тăр,
Манăн çул çулăм витĕр выртать.
Çунса кайрĕ ку, тейĕр, вăраххăн.
Çунса кайрăм та – килтĕм пулать!

* * *

Пĕчĕк çеç пĕр вырăн,
Пĕчĕк хутлăх пур.
Эс кунта халь пурăн,
Эс те кур-ха ыр.
Пĕчĕк çеç уçланкă,
Пĕчĕк çырла вар.
Эс кунта пуçтарнă –
Çук, эп çырла мар!
Çырлаланнă алă,
Ман тута çырла.
Чунăмра та, паллă,
Ман йăлтах çырла.
Пĕчĕк çеç уçланкă.
Пĕчĕк çеç тĕнче.
Мĕншĕн-ха хăварчĕ,
Пысăк йĕр чунра.

* * *

Пилеш чăмăртаннă, кур-ха,
Темле симĕс-хăмăр тĕспе.
Çак тĕнчене вăл килнĕ,
Пуласшăн пуль вăл хĕрпе?
Пĕр хĕр тени, чăн та, пурчĕ,
Килетчĕ чечек татма...

Халь тин вăл килме пăрахрĕ,
Чечекĕм ман пĕтрĕ тесе.
Анчах та чечекĕ чечек те –
Çырлийĕ те пур вĕт-ха!
Ăна эс татма килсессĕн,
Усса эп парап туратне...
Ун чух эсĕ татăн чечек пек.
Чечек пек пиçет пилеш!
Çырлийĕ пиçсе çитсен те,
Çав хĕр килессе пĕлеп.

* * *

Шăкки-шакки, шăкки-шак!
Сар хĕрсем килеççĕ.
Вĕсемпе пулмашкăн, няк,
Пурте – ĕмĕтленеççĕ!
Эх, пуласчĕ, тет пĕри
Унăн çумĕнче те.
Вăл вара чечек пекех
Тĕнчене çутатĕ.
Ун çути ман пулĕ те
Эпĕ те çутатăп.
Шăкки-шакки, шăкки-шак!
Хĕр иртсе каять, ак.
Пулаймарĕ çутасси –
Манăн чун та хатĕрччĕ!
Иртсе кайрĕç сар хĕрсем,
Сасси юлчĕ пулĕ.
Çав саспа килĕштерсе
Пурăнатăп халĕ!

* * *

Темле çемçелĕх те хитрелĕх
Ман чунăмра халь пурăнать.
Çĕре выртса чун чуп тăвать те,

Вара вилме те, тет, юрать...
Ах, чаплă-çке килчĕ çу вăхăт!

Ун пеклерех килсен, чăнах та,
Татах та эпĕ çын пулап...
Ачашланать çу вăхăчĕ,
Темле çырла пек авăнать.
Пуласчĕ ман пĕр ача майлă
Вара Тур пек эп пурăнап.
Анчах, анчах, ак, вăхăт иртрĕ.
Çу иртсе кайрĕ майĕпен.
Çапах чунра темле çемçелĕх,
Çапах чунра хитреленет.

* * *

Эсир пĕлместĕр пулĕ-ха,
Мĕнле çӳпрен эпир тухса.
Ахальтен мар пире час-час
«Çӳппи» тесе ят хунă та...
«Çӳпи», «çӳппи», епле пит чаплă
Капла эпир пулатпăр-çке!
Пĕрре вăл янăрать хăватлă,
Тепре айван пек, терĕр-çке...
Çапах çӳретпĕр ним те мар –
Эпир пĕр пĕчĕк çӳп кăна!
Пĕлместĕр-им, епле чипер
Сăвă хайлăнă пĕр поэт.
Çӳпрен, тет, тухнă сăвă та –
Эпир вара мĕнрен кая?
Эпир пулатпăр пит хăватлă
Пĕр сăвă пек пĕр çӳп кăна!

* * *

Тахçан, темскер шутланăччĕ,
Çырма тăрсан, манса-и юлнă?

Çапах та çакă сăвă пурччĕ,
Вăл та çырла пек пулнăччĕ!
Пур пирĕнте, темскер те пулĕ –
Пĕр Турă та, тен, пĕр шуйттан?
Епле, ак, ĕрĕхет чĕре те,
Пĕчĕк ача пуль. Чăтăм та...
Чăтăм çитмест тăма çырмасăр...
Пĕр пĕчĕк сăвă çех чуна
Епле вăл ачашлать, пĕлсемĕр!
Тахçан темскер шутланăччĕ
Пĕр сăвă пек ларса çырма.
Ак, тухрĕ те вăл ĕрĕхтерчĕ
Çак тĕнче тăрăх ачалла...

* * *

Кивĕ уйăх кайăк пек вĕçетчĕ
Уйсем тăрăм, сĕм вăрмансем урлă...
Ах, епле пуль вĕçтерсе пыратчĕ –
Çута уçлăхра епле пĕччен вăл!
Кĕвенти те пурччĕ. Хĕр пекки.
Тĕлĕнсе ларса пыратчĕ мар-и?
Манăн-и çĕршывăм ку,
Эпĕ мар-и чăвашра тăрсаччĕ?
Усалсем çиетчĕç вĕт пуça,
Пĕр тухатмăш питĕ кĕвĕç пулчĕ.
Ах, юрать çак уйăх таврара
Пĕччен-çех мана юлташăм пулчĕ.
Çавă илчĕ хăй патне... Часах
Эпĕр пултăмăр юмахăм майлă.
Кивĕ уйăх кайăк пек вĕçтерчĕ
Кĕвентеллĕ пĕр хĕре ку уçлăх тăрăх.
Халь ăçта-ши эс, çĕршывăм ман?
Мана çеç пуль курăнса юлайрăн.

* * *

Çитет пуль шăпчăксем çинчен.
Шăпчăк та чарăнать-и мар-и?
Çу çитрĕ. Утă вăхăчи.
Эпир те утă пуçтарар-и?
Пур вăхăтăн хăйĕн çави!
Ăна тек хирĕç тăраймастăн.
Пĕтерчĕ вăл юрăсене,
Ак, пĕтрĕ вĕт хурт сĕрлени те!
Çапах, çапах та тепĕр хут
Килет тепре ут ешĕревĕ.
Курăк шăтать те тепĕр хут,
Чечек шăршиллĕн чаплăланĕ.
Шăпчăк та килĕ тепĕре,
Çуркуннене савса юрлайĕ.

* * *

Умра выртать ман ансăр çулăм, –
Илсе каять таçта çити.
Таçта çити çĕклерĕ чунăм, –
Çитессисем те паллă мар!
Пĕрех эп утрăм, выванмарăм.
Утса çитсессĕн-и кăштах,
Кăштах ларса çеç канашларăм
Хам ыванна урасемпе.
Çук, çук, ларса та, тен, канмастăп.
Çырас килет çак сăввăма.
Мĕн-ма тесен, утсан-утсассăн,
Шăрçаланать сăвă вара.
Тухать таçтан, пит ывансан та
Хăват тени чунран таçтан.
Апла, пĕмен-ха эс, мăнтарăн,
Утту та, ак, кăшт çирĕпленчĕ...
Утса çитетĕп эпĕ, акă.
Анчах умра никам та çук.

Ман чунӑмра пӗр сӑвӑ ҫех...

* * *

Пилеш тӑкнӑ хӗп-хӗрлӗ ҫул,
Утса тухрӑм ӑна чиперех.
Ҫӑлтӑр пек хама туйрӑм пулас,
Ҫӑлтӑр пек утса тухрӑм пӗччен.
Ҫӑлтӑр терӗн-и, утнӑҫем,
Ҫӑлтӑрсем те ҫухалчӗҫ мар-и?
Аса килчӗ аттемӗн ҫулӗ,
Вӑл та утнӑ пулас ҫак ҫулпа?
Вӑл юрланӑ та пуль ҫавра юрӑ?
Эп те пӑхрӑм тытса пӗр ҫавра.
Ҫавӑраттӑмччӗ те пуль – пулмарӗ,
Пилеш ҫулӗ юлчӗ хыҫа.
Пилеш тӑкнӑ хӗп-хӗрлӗ ҫул
Пурпӗрех вӗт юлать чунра.

* * *

Ах, анчах кӗрхи кунсем ҫав, –
Ҫавӑрттарчӗ ҫил.
Чут куҫа кӗрсе пӗтмерӗ
Ҫул тусанӗ...
Халь пӑхап та – ҫил те ҫуккӑ,
Мана мар тытлать.
Ват йӑмра хӑй кӗрӗкне те
Тавӑрса пӑхать.
Вӑрман ҫийӗн сарӑ сарнӑн
Темӗн ялкӑшать.
Кӗрхи кун ура тапса та
Ҫитрӗ курӑнать.

* * *

Ватӑсем пӑхса лараҫҫӗ

Саванса каштах.
Хурлăхĕ те çуккă мар та.
Мĕн пулать татах?
Акă, путрĕç ĕмĕрсем те,
Мĕн пуласси пур.
Халь ĕнтĕ темле йĕрсен те
Таврăнассăм çук...
Иртсе кайрĕ чăваш кунĕ,
Çуккă пуласси.
Халĕ çакă ватăсем те
Пултĕç куç курми.
Халĕ тин усал сăмах çеç
Илтĕнет пĕрмай.
Эх, кулаççĕ, эх, вăрçаççĕ
Чăваш пурнăçне.
Ватăсем йĕрсе лараççĕ,
Мĕн усси тесе.
Ах, анчах та, тăхтăр, тăхтăр,
Çитĕ мĕн кĕтни.
Чăвашсен те савăк кулă
Тухĕ питсене.

* * *

Шыраса тупма пулать-и,
Ку тĕлте пире?
Темле вăрттăн, пĕчĕк хутлăх
Панă-çке пире.
Мĕн тума, тет, пире кирлĕ
Кунта пурăнни?
Тепĕр чух, пит шырасан та
Тупас çулне.
Вăхăт иртрĕ, çуккă ним те,
Çуккă çын тени.
Мĕн тума, тет, илсе килнĕ
Пире хут çине

Хут ҫинче пуль пулса юлчĕ
Эпĕр килнĕ кун?
Ним те мар, эпир килнех вĕт!
Эпир пур, ҫук мар!

* * *

Ёнер кăна утсаччĕ эпĕ
Ку сукмакпа пĕччен-пĕччен.
Паян вара юлташ та пур ман,
Пĕр пĕчĕк шухăш чĕрере...
Ҫав ăшăтать: «Эс, тет, чирлерĕн.
Пĕрех эс хăвăрт сывалан.
Мĕн-ма тесен, утса пĕтмерĕ,
Утсах эс халĕ вăй илен».
Чăнах та ĕнтĕ, утрăм-утрăм
Ниме пĕлмесĕр пурнăҫра.
Тен, эп тахҫан утса та тухнă,
Тен, ҫавăнпа чирлетĕп халь?
Ыйтап, ыйтап... Мĕн-ма тесессĕн,
Эп тупаймарăм сăлтавне.
Чипер ҫын пек утса ҫӳреттĕм
Ҫул тăршшипе, ҫул тăршшипе.
Ăт, ҫавăнта темле сасартăк
Чирлерĕм кайрăм, апăрша.
Паян та, ак, кăштах аптранă.
Вăйлах чирленĕ пуль, лапша!
Ҫапах, ҫапах, темле пулсан та
Эпир пĕтместпĕр нихăҫан!
Мĕн-ма тесен, паян ман пĕчĕк,
Пĕр пĕчĕк шухăш чĕрере.

* * *

Эх, ларать пуль улмуҫҫи шăнса?
Улмине те пуҫтарман никам та!

Сивĕ килсе çапĕ, çил тени те пур.
Улмисем çĕрсе выртаççĕ...
Улма шăрши тутлă, тутлă пахчара,
Ас иттерчĕ ман ачалăха.
Эп чупса тухаттăм. Тутлă улмара
Эп хама тупаттăп, тупата.
Халĕ аса килчĕ. Çав улмах пуль вăл.
Тахçан атте лартнă шухă пахчара.
Халь те авăнать пуль асăмра.
Эх, мĕнле аванччĕ сад пахчи...

* * *

Сăвă çырсах сывалатăп.
Сăвă çырсан эп пурнап.
Чăн та, ак, сăвă уттарчĕ,
Таçтан пек тухать вăй.
Халĕ тинех чирлеместĕп,
Эп чирлеме килмен.
Сăвă кăна янăратăр,
Ӳктĕр ума тур пани.
Ман вырăна çĕклентĕр,
Сăвă ту пек тепре!

* * *

Мĕнле пурăнатăн, ялти таса вырăн?
Килсе те курманччĕ тахçан авалтан.
Паян çитсе куртăм, епле эсĕ ырă,
Хĕвеллĕ те çутă, таса ялтăрав...
Тавах сана, тусăм! Çак ырă сăнар
Пулсаччĕ манра аякра пулнă чух...
Çапах та манра темле лăпкă марччĕ.
Тапатчĕ чĕре, ас тăвап, питĕ шух!
Сиссе пуль, чăнах та, санпа питĕ лайăх,
Пулса вĕт эс маншăн сăпка...
Ак, халь те темле ачаш çупăрланăн

Апла, тен, эс маншăн, халь, юрăра.
Тен, çавăнпа, эпĕ тăтăм пĕр вăхăт,
Сана аса илтĕм татах.
Тавах таса вырăн. Тепре тĕл пулсассăн,
Туятăп тапать ман чĕре ялалла

***

Шутламастпăр, ним те шутламастпăр.
Лайăх пуль тесе, таптатпăр та...
Урапа çапла пусса касса каятпăр.
Ăнланмастпăр – хамăр пĕтнине...
Эпĕр вĕт мĕн турăмăр пуль, тетĕр?
Эпĕр таптаса хамăр чуна.
Çынна мĕн эс, таптаса-и халĕ,
Пысăкка шутларăн пуль пулма?
Çук çав, çук! Мĕн чухлĕ эс таптарăн,
Çавăн чухлĕ тухрĕ санăн чун.
Халĕ мĕн, эс халĕ пĕр таптавçă.
Урăх ним те мар. Эс çын та мар!
Ак, таптa, апла, татах таптa-ха!
Эс пĕтер, пĕтер хăвна халь йăлт!

***

Мĕн çунать унта халь. Çăлтăр мар та...
Ах, анчах еплерех курăнать!
Ку çын, чăн та, темле çăлтăр евĕр
Халь те пулĕ вара ялкăшать?
Апла, унăн чăн чунĕ пуль пысăк,
Вăл ытла та тасан курăнать?
Пĕр суймарăн та – пултăн пысăк.
Пĕр чăнпа та пулать пурăнма...
Ах, анчах, ун пек çын сукка пулĕ?
Ас илер, ас илер-ха татах...
Суйнăçем, çăлтăр тенĕ çав пурнăç
Вăл хăех пуль çапла çуралать?

Халь мӗн пулчӗ. Халь ҫукка ӗнтӗ.
Ҫӑлтӑр тенӗ ҫав ҫын ҫухалать.
Ҫӑлтӑрсем вырӑнне халӗ тӗксӗм,
Хура шӑтӑк пек ҫын ялтӑрать...

***

Публицистика-и ку? Ку, вӑл чун!
Чун епле кӑшкӑрса макӑрать!
Вӗрентетпӗр тесе улталарӗҫ,
Йӑлт салатрӗҫ чунпа ӑс-тӑна...
Тӑнӗ те пирӗн питӗ хитречӗ.
Эх, шутлатчӗ чӑваш савӑнса.
Чунӗ, чунӗ те хӗпӗртетчӗ,
Хӑй пекех тепӗр чун тупсан.
Халь ҫухалчӗҫ вӗсем. Урӑх ҫукка!
Урӑх ҫук чӑваш чунлӑ ҫын.
Шухӑшлатпӑр эпир вырӑс майлӑ,
Пурӑнатпӑр кунта – ҫын та мар!
Мӗн пулса иртрӗ пулӗ теетӗр,
Пулса иртрӗ ҫав, пулчӗ «аларм!».
Хамӑра эпӗр тек пӑхаймастпӑр.
Ҫукка пирӗн пиртен вӗрентӳ.
Ҫавӑнпа та ютла вӗренсессӗн,
Эс ютта пурпӗрех вӗт тухан...
Халь тен ҫитрӗ те ҫапрӗ ҫав ахрӑм,
Халӗ тин ҫитрӗ пуль ҫав улпут?
Халӗ тин ӗнтӗ мӗн тӑвайӑн,
Ачасем те пурнаҫ вырӑсла.
Апла, эсӗ тепре атте майлӑ
Выртса пӑх-ха ҫак ҫӳллӗ сӑрта!

***

Мӗн чухлӗ ҫырман эп, мӗн чухлӗ?
Кун иртнӗ пулех мансӑрах.
Мӗн чухлӗ татах эп ҫухатнӑ,

Çухатнă чуна çавăнтах...
Чăнах та, ак, вăхăт та иртрĕ,
Пĕр сăвă та эпĕ çырман.
Пĕр чаплă хĕре хăть курасчĕ,
Тытасчĕ ăна аларан...
Эх, эпĕ те çав, ăçтиçукăм!
Халь çыр-ха татах, çыр!
Ку пурнăçра куран вĕт,
Эс çуккă пекех тăран!
Ку пур тесенех, эсĕ пур пек.
Эс çук тесенех – эс çук!
Мĕне пĕлтерет ку, пĕлетр-и,
Пĕлетр-и, ку, чăн тĕнчене?
Çак тӳпере пĕлĕт евĕр
Пултăмăр эпĕр халь тин.
Тен, çавăнпа вăхăт иртрĕ,
Иртрĕ çак пĕлĕт пекех.

## Михаил Сунталăн пултарулăх тĕнчи.

М.Сунталăн (Желтовăн) сăввисене вуланăçемĕн, ытларах та ытларах, пыр тĕпне хытса ларнă темĕнле ĕсĕклев пуррине туйса илетĕн. «Карланкă çăхан сасси кăларчĕ» статьяра[1] Ю.Яковлев М.Сунтала медиум тесе палăртать. Тĕрĕссипех те лирика геройĕ туйăмсен ытамĕнче, вăл хăйĕн тĕнчине путнă.

Сăнсем, сăрăсем, ĕмĕлкесем мĕлтлетеççĕ. Анчах Сунтал пултарулăхĕнче тĕрлĕ САСĂ мала тухать: уçлăх сасси, йывăç-курăк сасси, чул сасси, кайăк-кĕшĕк сасси т.ыт.те. Лирика геройĕ вакуумра пулнăнах, тепĕр чух хăйĕн сасси çеç мар – хупăрласа тăракан тĕнче сасси унăннипеле пĕрлешсе хăй патне каялла таврăнать:

Çĕр сас вăрманта.
Темле çурхи кайăк
Тĕрлет хăйне майлă кантата.
Илтмен нихăçан та.
Çурхи пĕр кантăк
Чанкăрр! ванчĕ...

Кунта лайăхах курăнать: лирика субъекчĕ нихăçан илтмен кайăк сассипеле, вăрманти çĕр сасăпала пĕрлешсе чунне ирĕке яма пуçăнать çеç - темĕнле вăй «чанкăрр!» кăна каялла çĕр çине «çавăрса çапать». Пĕрре те мар, е - хăрăк турат хуçăлса шарт сиктерет, е - кайăк кĕтмен çĕртен кăшкăрса ярать... Час-часах капланса çитнĕ туйăмсене çиеле кăлараймасть. Сăвă хывăмĕ, çиелтен пăхсассăн, тикĕс йĕркеленет пек. Апла пулин те, шалта кĕç-вĕç вут хыпса илесле напряжени пурри сисĕнсех

---

[1] Яковлев Ю. Карланкă, çăхан пек, вилĕм сасси кăларчĕ Хыпар.1997.Авăн,19

тăрать: ялтлатакан, йăлтăртатакан çиçĕм сăнарĕ сахал мар тĕл пулать. Чунра пусарса тăракан хăват мĕн тери капланса çитнин йывăрлăхне лирика геройĕ тумла тумлани урлă сăнарлать.

Тумлам тумлать асăрхануллăн,
Кĕтсе тăрать те пат тăвать.
Пат! тусанах темле хăрушшăн
Тĕнче кисреннĕн туйăнать.
Çĕре çав ӳкнĕ çут тумламăн
Ванса каять пуль ман чĕре те.
Ха-ха! кулса тăрать тĕнче.
Вăл кулнăçем, пӳрт тăрринчен,
Пĕр вăхăт шăп тăрсан-тăрсан,
Шапăрр! тусах пăр тăкăнать...
Чĕре вара, тем, савăна-а-ать!

Напряжени кульминацие çитет. Пĕр тумлам, тепре... Туртăнса-карăнса çитнĕ чун чĕлĕхĕ татăлса каять, энерги çиеле тухать. Сас-чĕв вылявне хăйне уйрăм уйрăмăн пăхсан та çак курăмлă ӳкерчĕк куç умне чĕррĕн тухать: тум... тум, пат... пат! тум... ван... ман... тăрсан-тăрсан, шапăрр! а-а-а! «А-а-а!» хыçĕнче - кăмăл-туйăм ирĕке тухнин çăмăллăхĕ те, кăшкăру хыçĕнче - ырату та. Калас пулать, çакнашкал, «ункăна» татса тухни Сунтал пултарулăхĕнче пĕр-ик-виç хутччен çеç пулать. Ытти чухне, çӳлерех палăртнă пек, медиум тăрăмĕ: хупă ăшĕнче хăйпе хăй антăхса калаçни.

Чылай чухне поэтсем чăнлăх шыраççĕ. Сунтал лирика субъектне «ыйту», «хурав» интереслентермест. Вăл эпир пĕлменнине пĕлет: хăйĕнпе, тăван халăхпа мĕн кĕтнине тата тĕнче пĕтмĕшне курса тăрать. Çакă ăна хăратать. Ун çинчен калама та юрамасть пулмалла...

Чакак чак-чак! чаклатрĕ,
Тăкăнчĕ çумăр пăт-пат!
Тăрсах эп çавна тăнларăм,

Ăнлантăм чан çапнă пекрех...

(...) Тен, чăн та, такам çырса хунă
Никам та курман пĕр пурнăç
Кĕтет пуль мана утнăн...

Е: (...)Унтан лăп çеç ÿкĕп. Эп выртăп нумай...
Хăçан та пулин пайланать çак планета...
Пĕр ванчăкĕ ÿкĕ таçта тепĕр май...

Тĕнче пĕтессин мотивĕ - Сунтал пултарулăхĕнче пуç пулса тăракан кĕвĕ-çемĕсенчен пĕри. Çав вăхăтрах, лирика геройĕ хăйне лăпланмалăх ăнкару патне çитет: чун вилĕмсĕр, вăл кунтан кайнипех тĕппипех çухалмасть. Унтан та ытларах, тепре çĕр çине килес пулсассăн та (çĕр чăмăрĕ арканиччен вăл пĕрре мар килĕ-ха) - хăйне урăхла шăпа курмасть:

Кун чакса пынăçем
Кĕчĕ хĕвел пÿлĕме.
Пулчĕ вăл хăй пĕчĕк çемĕ
Тунсăхлă чĕреме...
Эп ĕнтĕ нимех те кĕтменччĕ
Çакă иртен çут кунтан.
Никам та кун пек килменччĕ -
Анне те кун пек курăнман!
Ак, ĕнтĕ халь пĕчĕк паллă
Пачĕ пуль вăл таçтан...
Туйрăм хама чун хавалла.
Куртăм хама аякран...
Эп мĕн пĕччен те пĕчĕк
Ларатăп пĕр кивĕ пÿртре,
Хĕвел çутипе килетĕп,
Каятăп - хĕвел çутипе!

Поэзире, ытти литература тĕсĕсемпе танлаштарсассăн, содержанипе форма уйрăмах тачă çыхăнура тăраççĕ. Енчен те сăвăç содержание çĕнĕлĕх кĕртрĕ пулсассăн - çав улшăну формăра палăратех; форма улшăнăвĕ те содержанире йĕр хăвармасăр иртмест (паллах, кунашкал çыхăну вăл пур поэт пултарулăхĕнче те пĕр шайра мар: мĕн чухлĕ çӳллĕрех поэзи - çавăн чухлĕ содержанипе форма хушшинчи çыхăну та çирĕпрех). Акă мĕн калать кун пирки вырăссен паллă литературовечĕ В. Кожинов: «Мельчайшее изменение формы означает изменение содержания, смысла. И наоборот: каждый штрих, каждый нюанс смысла неизбежно осуществлен, реализован в форме».[2]

Сăмахран, П. Яккусен поэзийĕнче малтанхи тапхăрти лирика геройĕн чĕрине пĕчченлĕх пусармасть, ирĕклĕх çеç кӳрет. Çав вăхăтра герой сăмахĕ те юхса-шăранса пынăн туйăнать, час-часах юрра та ĕнерĕнет. Сăвăран сăвва «хĕвел», «чечек», «юр пĕрчи», «çăлтăр»,.. сăнарĕсем куçса-аталанса пыраççĕ. Тулли рифмăсем, хăйне евĕр илемлĕх мелĕсем куçа шартаççĕ. Анчах та каярахпа - чун пушăлăхĕпе сахал мар куçа-куçăн тĕл пулса шаннă-ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем «шырлана тăрăннăçем», чĕрене пĕр-пĕчченлĕх амакĕ хĕстере-хĕстере килнĕ май - лирика геройĕн калаçăвĕ те улшăнать. Малти вырăна «пуш хир» сăнарĕ тухать, тата хура тĕс тăтăшах мĕлтлетет. П. Яккусен лирика субъечĕ çак «пуш хирте» пĕччеленлĕхпе асапланнине, кăмăлĕпе кӳтсе çитнине тата чун хавалĕпе такамран темĕн ыйтнине, кăшкăрнине сăвăсерен тенĕ пек тĕл пулакан ыйтуллă, кăшкăруллă, хистевлĕ предложенисем витĕмлĕ сăнарлаççĕ (уйрăмах «Çавра кӳлĕ» кĕнекере). Лирика геройĕ хăйне çынсем ăнланманнине (е ăнлансах пĕтерейменнине) сиссе-тĕр пысăк шухăш-ырату пытарнă сăмахсене час-часах вăрăм йĕрпе (–) уйăрать.

---

[2] Кожинов В.В. Стихи и поэзия.-М: Советский писатель. 1980. С.34

М. Сунталăн сăввисем Яккусен каярахри тапхăрти поэзине çывăхрах: пĕтĕмĕшле пултарулăх пафосĕ - пусăрăнчăк. Лирика субъекчĕн пĕччен пулни, унăн чунĕнче хăрав хуçаланни, темĕнле хупăра хăйпе хăй калаçни сăвă чĕлхинче ӳкерĕнет. Интонаци-синтаксис тытăмĕ кăшкăруллă, ыйтуллă формăсемпе пуянах мар (каларăмăр: герой хурав шырамасть, вăл ăна пĕлет) - анчах паузăсем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Ăна нумайпăнчăлăх (...) йĕркелет. Кашни хутсăр предложени уйрăм йĕрке йышăнса хăйне тĕллĕн единица пек курăнса пыраççĕ. Вăл анчах та мар: çав пайрăмсем умлă-хыçлă, умлă-хыçлă купаланни монотонность тăвать. Пусăрăнчăк кĕвве уçăлма памасть, татах та йывăрлатать. Ку ĕнтĕ пĕтĕмĕшле пултарулăхăн содержанипе форма уйрăлми çыхăнăвĕ. Уйрăм сăвă тĕслĕхĕсене илес пулсассăн та кăсăклă вырăнсем тупăнаççĕ.

«Кун чакса пынăçем» текстăн (кăшт çӳлерех) схеминче содержанипе форма çыхăнăвĕ питех те кĕтменле:

```
1 ç.  *    *          *
     _ _ _    _ _ _
       *    *          *
      _ _ _    _ _ _  _
       *         *     *
      _ _ _    _ _ _  _
        *        *
      _ _ _    _  _ _

2 ç. _ _* _   _ _* _   _ _* _
       _* _ _   _* _ _*
       _ _* _   _ _* _   _* _
       _ _* _   _ _* _   _ _*

3 ç. _ _* _   _ _* _   _* _
       _* _ _   _* _ _*
       _* _ _   _* _ _   _* _
       _* _ _   _* _ _   _*
```

4 ç. – – –* – – –* –
– –* – – –* – – –*
– –* – – –* – –* –
– –* – – –* – – –*

Малтанлăха пăхсассăн, ниměнле вăрттăнлăх та, виçе те çук пек (дактильпе амфибрахи виçисем хутшăнса-пăтрашăнса пěтнě, картсем тикěс мар). Сăввăн идейи: лирика геройě «хěвел çутипе килсе хěвел çутипе каяссине» ěненни терěмěр. Схемăна пăхсассăн, 1-měш çаврари юлашки икě йěрки 3-měш çаврари юлашки йěркесем; 2-měш çаврари пуçламăш икě йěрки 3-měш çаврари малтанхи йěркесемпе шăп та шай пěрешкел (3-měш çаврари 3-měш йěркере çеç пěр карт «ытлашши»). Акă умра спираль çаврăнăвě: иккен лирика субъекчěн ěненěвě, пурнăç тěмсěлěвě содержанире кăна мар - формăра та чěррěн ÿкерěнет, чăнлăх пек тухса тăрать. Унсăр пуçне, пěрремěш çаврара пусăмсем пěрре чăн малти сыпăк çине, тепре чăн кая ÿксе тата тепěр ункă пулать. 1-měш çаврара пусăмсем малти сыпăксем çинче пулни хěвел паярки «кěнине» (лирика геройě тěнчене килнине), 4-měш çаврара каялла сикни хěвел «аннине» (лирика субъекчě кайнине) сăнарлать пек (сх. пăхм.).

Çапах та, çěр çинче утса çÿренě чух, пурăннă чух хăв кунтан кайсассăн чăннипех тěпě-йěрěпе çухалманнине - вилěм çуккине - вěçне çитиччен ěненсе пěтме пулмасть пулě. Ю. Яковлев хăйěн статьийинче[3] илсе панă Сунтал сăмахěсем этем чунěнчи хирěçÿлěхе витěмлě уçса параççě. «Çак пурнăçра эпир вилме çуралнă. Эп шутлатăп: çын вилěмрен хăрама пăрахрě пулсан - вăл çын пулса çитрě. Вилěмрен хăрамалла мар. Вилěмрен хăтăлмалли пирки эп пěрмаях шухăшлатăп. Вилěм туйăмě халăхра вăйлă

---

[3] Асаннă ěç,

аталаннă (чăваш хушшинче çынсем хăйсене хăйсем вĕлерес йăла сарăлни, синкер тĕнчетуйăм). Çак кăмăлтуйăма хирĕç ялан кĕрешетĕп. Вилĕмпе эп уççăн мар, вăрттăн, çемçен кĕрешетĕп...», - тет поэт. Парадокс: пĕр енчен, вилме çуралнă, вилĕмрен хăрамалла мар тет - çав вăхăтрах, унран хăтăлмалли мел шыратăп, ялан кĕрешетĕп тет. Вилĕме йышăннă, унран хăрамасть пулсассăн мĕншĕн-ха хăтăлмалли мел шырать, мĕншĕн унпа кĕрешет? Поэт темĕнле татса тухайми ункăра: «вăрттăн, çемçен» кĕрешет, хăйпе хăй калаçать - чунне пусараймасть, мĕн пулса иртмеллипе (неизбежное) çураçасшăн - вăй-хăват çитерейместь. Чĕрери çак «вăрçăпа» хăрав мар-и пыр тĕпне ĕсĕклев хыпса та хыпса пынин, сăвă чĕлхи пултарулăх тăршшĕпе уçăлса-якалса çитейменнин сăлтавĕ. (Ритмика вылявĕ чухăн мар: ăна тума пĕр çаврарах умлă-хыçлă черетленекен икĕ, виçĕ картлă сăвă виçисем пулăшаççĕ - анчах çак пуян ритмика та сăвăсен кĕвĕлĕхне ÿстерместь). Апла «спираль çаврăнăвĕ» канлĕх кÿмест, чун канăçсăрлăхĕ тамалмасть. Поэт паянхи йывăр тăрăмран тарас-хăтăлас-манăçас тенĕ пекех çине-çине ача чухнехи самантсене тĕпренчĕкĕн-тĕпренчĕкĕн антăхса пуçтарать («Пăхать-ха хĕвел пĕр хушă» 2-мĕш кĕнекене пĕтĕмпех çамрăк вăхăта аса илсе çырнă, чăваш поэзийĕнче кун пекки урăх çук). Ку кĕнекере, чăннипех те, кăкăрта темĕн уçăлса кайнăн, пуплев ирĕкленет (пĕр йĕрке çеç йышăнакан кĕске хутсăр предложенисем вăрăмланаççĕ). Çутă сăнсем нумайланаççĕ. Чи палăрăмли: сас-чĕв улшăнать: унччен шарт сиктерекен сасăсем илтĕнетчĕç пулсан, халĕ - «шăкăрт-шăкăрт», «чак-чаю», «чăн-чăнн! урапа сасси», «шик! тăвакан кайăк»,..

Анчах епле ÿкерчĕк кураттăр-ха, мĕнлерех унăн вăрçă хыççăнхи ачалăхĕ. Иккен выçăллă-тутăллă, çарран, алран кашăк тухса ÿкмелле тырă вырса ывăнни, кирпĕч тума сивĕ тăм çăрни, шур пит тăрăх тар юхтарса хăра-

хăра çухалнă ёнене каçпа шырани, лесникрен шиклене-шиклене курăк татса йывăр çёклем çёклени,..

Çимелли çукки лирика геройĕн чунĕнче калама çук нихçан манăçми йĕр хăварнă пулас: вăл хăй сисмесĕрех хырăм выççи çинче сăмаха час-часах пусăмлать. Çапла нумай сăвăра «юлашки чĕл», «пĕр çăмах», «çырла техĕмлĕхĕ», «мăйăр катни» т.ыт. пайрăмсем çиеле тухаççĕ:

Микки сăрчĕ çинче таçта
Пурччĕ пирĕн тыр акнă ана...
Хырăм выçнă та кăнтăр апачĕ
Ман аппа хутаçран кăларчĕ.
Мĕн апачĕ унта? Пĕр çăмах.
Кăшт сыпмалăх йÿç сĕт анчах...
Е:
Вĕлтлететçĕ кăна кĕлтесем...
Çÿлерех, çăмăлрах та, хĕрсем
Астараççĕ пире шÿтсемпе...
Ывăнсан, ак, ларатпăр канса...
Çитрĕ вăхăт апатланма...
Пурччĕ-ха хутаçра улмасем,
Пурччĕ çăкăр пĕр татăк тата...
(...)Ах, анчах ман хутаç пуш-пушах,
Куççульсем те тухатчĕç чутах.
Питĕ выçă пулсан та чĕнмес.

Иккĕмĕш кĕнеке хырăм выççан вăрмана кашличĕ çиме кайни çиме кайнипе пуçланать те кашличĕ çинипех вĕçленет:

Пĕр ывăç пулсан кашличĕ
Ирхи апат пулчĕ те...
(...)Эп хам та паян питĕ выçă.
Тен эп эрнипех çимен?

Тĕрĕссипе, ачалăхне аса илни, Сунтал лирика геройĕшĕн, «типĕ утă ăшĕнче типнĕ çырла шырани» мар-и. Е - мăйăр катни:

Урамра выртатчĕ пĕр юман каска,
Ун çинче ларсаччĕ эп апат туса...
Аллăмра ман пурччĕ яка чул татки,
Ик кĕсье тулличчĕ мăйăр сап-сарри.
(...)
Мăйăрĕ те пур ман ик кĕсье тулли...
Тепĕр хут катмашкăн пур-ха чул пекки
Ах, анчах, куратăп, çуккă-çке каски.
Ĕнтĕ çук ачи те, ĕнтĕ çук сасси...
Чулĕ те çухалнă... Çук Йăлăмкасси!
Пурпĕрех пăхап-ха, майĕпен шутлап:
Çав каска пулсассăн, эп те пурăнап...
Шыраса тупатăп пĕчĕк чул пекки,
Çав тĕлех хуратăп пĕр хăма татки...
Шалт! катса пăхатăп сарă мăйăра
–
Эп хама туятăп иртнĕ вăхăтра!

Чĕре çинчи йывăр çĕклеме илсе перес, чĕрĕ юлас тесе «чул пекки», «хăма татки» (асăрхăр: унччен «яка чул таткиччĕ», «юман каскаччĕ») тупать, шалт! катса пăхать те - нимĕн те çук. Пĕр йĕркене пĕр вăрăм йĕр лартать, çак паллă сăмахсенчен ытларах, витĕмлĕрех шухăша уçса парать. Урăхла каласан, ачалăхне аса илни çăмăллăх кӳрсех пĕтермест. Киленĕç туйни çеç. Киленĕçĕ ирĕклĕхпе çыхăннă. Ачалăхра чи пахи - чун ирĕклĕхĕ. Апла тинех лирика субъекчĕ пĕчĕккĕ чухнехи вăхăта мĕншĕн таврăнни уçăмланать пек. «Анчах телей тени вăл нумая пымасть», Сунталăн геройĕ каллех шеллевсĕр чăнлăхпа куçа куçăн юлать.

Ăна йывăр, калаçăвĕ йывăр... тетпĕр. Мĕнрен пуçланать-ши синкерлĕ тĕнчекурăм, тĕнчетуйăм?

Пĕрремĕшĕнчен, халĕ анчах пăхса тухрăмăр, çăмăл мар ачалăхĕ унăн пурнăçĕнче йĕр хăварнă, вăл хăйне май хатĕрленӳ никĕсĕ те пулса тăрать пулмалла.
Иккĕмĕшĕнчен, хурава - малашлăхра мĕн кĕтнине - пĕлсе тăрать (вăл ăна пĕрмай шутлаттарать, хăратать).
Виççĕмĕшĕнчен, çапах, чăн-чăн инкекĕ савнийĕпеле, вăл хăйĕн патне çывхартманнипе çыхăннă-тĕр. Ма тесессĕн юрату объекчĕ уншăн (тĕлĕнмелле: амăшне те вăл шая çĕклемест) Турă шайĕнче:

Эп сана çӳлерех те çĕклетĕп -
Эсĕ тивĕçлĕ иконостаса...

Апла пулин те:
Эпĕ ĕнтĕ тем чул пăхса лартăм
Турă пулĕ тесе шухăшларăм.
Анчах эсĕ мана пулăшмарăн.
Çавăнпа та:
Савни килсе чуп тăвиччен
Сивви пĕтмест-ха ку тĕнчен.

Чăн-чăн кисренĕвĕ те унпах çыхăннă: темĕн чухлĕ вăхăт иртсессĕн савнийĕпеле тĕл пулать. Тĕкĕр умне пырса тăраççĕ - лирика геройĕ хăй ваталнине, ĕмĕр иртнине туйса-ăнланса илет, чунĕнче темĕскер тапранать, ĕмĕрлĕхех хуçăлать:
(...) Анчах куллăм çуралнă чухнех вилчĕ.
Эпĕ-мĕн курăнатăп питĕ ватă,
Çав ăнлав ман чуна йăлтах ватрĕ.

Çакăн хыççăн вăл пĕр-пĕччене пулнине систерет, сывлăх чаплах мар - чĕре ыратать текен нотăсем илтĕнме пуçлаççĕ:
(...) А эп вара таçта хам халлĕн
Тăрса юлатăп юнашар.

Санпа пулма çитмест ман халăм -
Эпĕ хам та сывă мар.

Темле сывлатăп пек пĕр майсăр,
Темле чĕре те ыратать...
Ак, халĕ те сывлăш тухмасăр
Мĕскĕн Мишша асапланать...

Чăн-чăн поэт пулнă май, ăна хăйĕн шăпи, хăйĕн инкекĕ çеç пăшăрхантармасть - тăван чĕлхе, тăван халăх пирки шухăшлать. «Чăн та, халăх теми юлашки вăхăтра «модăна» кĕчĕ. Хăйне хăй тенĕ пек, нумайăшĕ халăх инкекĕнче (тен, вилĕмĕнче те) хăйĕн пултарулăхĕ валли пусман çерем çеç курать. Çавăнпа часрах ăна сухаласа тăкмалла та - манмалла»,[4] - тесе çырать В. Степанов.

«Чăвашлăх» ячĕпе витĕнсе кăшкăракан чылай сăвăç пек, шĕкĕр хуламăрта тăван чĕлхепе калаçманшăн «чĕрене çунтарса», макăрса сăмах нумай вакламасть. Чăваш тĕнчин хаклăх никĕсĕсене, çав хаклăхсем иксĕлсе-тамалса пынăçем тăван чĕлхене тата халăха мĕн кĕтме пултарасса икĕ-виçĕ штрихпа уçса парать. Тÿнтерле лару-тăру темиçе йĕркере сăнарланать:

Çул хĕрринчи йывăç сывăç çу варринчех çулçă тăкнă.

Çулĕ те çуркаланса пĕтнĕ.

Садике каякан хĕрача сарă çулçăсене тапкаласа пырать.

Такăнчĕ ÿкрĕ!

«Бобо!» - терĕ.

«Я те дам бобо!» - кăшкăрса пăрахрĕ амăшĕ.

Аллинчен карт! туртрĕ.

---

[4] Степанов В. «Куçăма курăнинччĕ шевлеллĕ ката...» // Хыпар. 1990, окт.12

Пӗчӗк хӗрача хӑйӗн пӑшӑрханӑвне, кӳренӗвне, пулӑшусӑрлӑхне урӑхла ниепле майпа та калайман-пӗлтереймен пекех поэт ача-пӑча лексиконӗнчи сӑмахпа усӑ курать. Çак пӗр «БОБО» - «тӗнче тӑрӑх янӑраса каякан», «çӗре чӗтретсе-чӗртетсе илекен» чун ыратӑвне, лирика геройӗн пуçтарӑнса-капланса çитнӗ пӗтӗм кӑмӑл-туйӑмне пӗтӗçтерсе тӑрать. «Бобо, бобо, бобо!» тесе çине-çине кӑшкӑрни синкерлӗхе пушшех вӑйлатать, çан-çурӑма çӳçентерет.

Чӗрсем хытса пынишӗн (амӑшӗ ачине хӗрхенес вырӑнне вӑрçса тӑкать), чӑвашла калаçманнишӗн, тепӗр сӑвӑç пек хӗм кӑларса вӑрçнӑ пулсан чунне лӑплантарнӑ та пулӗччӗ Сунтал геройӗ. Анчах «мӑнтарӑн чӑвашӗ» утнӑ çӗртех такӑннишӗн ӑна хӗрхенет вӑл, унӑн йывӑр шӑпине ӑнланма тӑрӑшать - çакӑнта унӑн сапӑрлӑхӗ палӑрать:

Çурӑкӗсене çулçӑпа хутӑш «бобосем» кӗрсе ларнӑ.
Çулӗ те ӗнтӗ, чӑнах та, йӑлт çуркаланса пӗтнӗ.
Çакӑ такӑнтарать пулас!

Нумай чухне поэтсем шалти чун тӑрӑмне тӗрлӗ пайӑрӑмсем витӗр кӑтартаççӗ. Л. Мартьянова ӑна АЛӐ урлӑ уçса парать (Ун пирки эпир 2002 çултах кандидат диссертацийӗнче поэтесса пултарулӑхне тишкернӗ май каласа хӑварнӑччӗ)[5]: «Лирическая героиня пребывает в постоянной психологической напряженности, связанной с необходимостью постоянного внутреннего выбора. Внутреннее состояние лирической героини раскрывается через детали. Причем одна деталь может иметь несколько вариаций: сивӗ алӑ, кӑварпа пиçнӗ алӑ, ачаш алӑ, шурӑ алӑ». Сунтал пултарулӑхӗнче ЧУЛ сӑнарӗ

[5] Н.Г Ильина. Поэтический мир современной чувашской лирики.// Канд. дисс. на соск. уч. ст... «2002.

малти вырăна тухать, вăл деталь шайĕнчен çӳлерех. Асапланса-ывăнтарса çитернĕ шăпана, пурнăçа, анчах тем пулсан та хуçăлман—пĕтмен-путман çирĕп кăмăла сăнарласа тăрать ЧУЛ. Çак символла сăнар мĕнлереххине кура лирика геройĕн пурнăç тапхăрĕ, чун тăрăмĕ пирки пĕлме пулать:

1. çул хĕрринчи чул (хура тăпрапа хупланăскер, çеçке çурать - йывăрлăхсем витĕр тухса чунĕпе илемленет);

2. ĕнсе кайнă, хуп-хура та яка чул (пурнăç «çунтарнă» хыççăн);

3. шывра хăвăрт путман чул (лирика объекчĕ ăнтăхса чуп тунă, чĕре çумне илсе вылянă хыççăнхи чун тăрăмĕ);

4. сивĕ çапсан аслати пек шартлатса çурăлакан чул. Çынсем ним çукранах вăрçăннине-çапăçнине, пĕр-пĕрне курайманнине-кĕвĕçнине курса, çапăçса ывăннă хыççăн унăн урăх никама та нимĕн те каласа ТĂНЛАНТАРАС килмест, чунĕ ырса çитнĕрен халтан кайса чул пек тĕнче пĕтмĕшчен выртас килет. Анчах чун сиввипе шăнса çитнĕ (пултарулăх тăршшĕпех ахрăм каять, пĕрре мар «хĕвел çинче те ăшăнайманни» пирки палăртать), çавăнпа та вăл халĕ «шартлатса çурăлать», çавăнпа çак сăвă хывăнать, çавăнпа çак сăмахсем каланаççĕ. «Аслати пек шартлатса çурăлакан чул» - тулса-кӳтсе çитнĕ туйăмсен палли:

Пĕр сăмах та калас килмест.
Пĕр сас та кăларас марччĕ!
Курăк пек... Çук, чул пек
Пĕр хускалмасăр выртасчĕ...

Лайăх пуль çапла ĕмĕр-ĕмĕр чул пек хытса выртма.

Ун пек хытă япалана никам та пырса тĕкĕнес çук...

Ку, Турă, тесе, тен, пуççапма тытăнĕç... Тен, çапăçма...

Манăн тавра юн тăкăнĕ... Чул пĕрех пĕтес çук,
Пĕрех каламăп пĕр сăмах та!
Çапăçчăрах, пĕтерччĕр пĕрне пĕри!
Эпĕ чул вĕт. Атя, сăхсăх та яр çамкаран!
Çухăрса яччĕр шари!
Лайăх пуль çапла ĕмĕр-ĕмĕр ним туймасăр выртма.
(...)Халĕ эпир чĕрĕ мар, эпир чул!
Хĕвел пăхсан хĕрсе выртăпăр,
Сивĕ çапсан аслати пек шартлатса çурăлăпăр...
Çавă пулĕ чулăн пĕрремĕш сăмахĕ!

Çӳлерех каланисене шута илсе Ю.Яковлев шухăшĕпе килĕшсех пĕтес килмест: «Сунтал хăйĕн пултарăвĕнче Юркин курнă тĕлĕкех (çӳлти хăватсем панă тĕлĕке) курать. Сарри - хаткосен çил-тăвăл турри. Хаткосемпе хурритсем ĕлĕк-авал юнашар пурăннă. Сăвăри шухăша (чул сăмахĕ аслати сасси пулĕ тенине) çакă ăнланмалларах тăвать»[5]. Пирĕн шутпа, Юркин тĕлĕкĕ пĕтĕмпех мĕн пулса иртнипе çыхăннă - пĕр çын Пăлхар хули вырăнне курма пырсан пуç шăмми курать, çав пуç шăмми хăйĕн пурăннă чух мĕн тери мухтавлă, чаплă пулнă пирки, халĕ вара ăна, пуç шăммине, тапса иртеççĕ. Ку чăннипех хăй халлĕн çывăрнă чух курăннă пулăм. Сунтал лирика геройĕ вара çапла чунсăр пурнăçпа вăрçăнса-хирĕçсе пурăнсан-пурăнсан мĕн пулассине куç умне кăларать. Ăс-тăнĕ унăн татăлса-сирпĕнсе каяс пек вĕри. «Пĕтместпĕр», «тĕнче хăйне хăй пĕтме памĕ. Пĕтсен те шăтса тухăпăр» тесе пурăннă çĕртех çĕтсе çухалма пултараяссине курать вăл.

5. М. Сунтал поэзийĕнче «шыв-шур çурса кайнă хыççăнхи «шап-шурă чул» пур. Чул тата сырма уйрăлми

---

[5] Савăнтах

çыхăннă. Çырма, лирика субъекчĕшĕн, пуçламăшĕн пуçламăшĕ. Иккен пĕтĕм ачалăхĕ вар тĕпĕнче пытаннă, вăл амăш варĕ, чĕрçийĕ вырăнĕнчех:

(...)Анне чĕрçине таптанăн
Ак, халь те утса пырап.
Вар тĕпĕнче пытаннăн,
Ачалăхăм, туйăнать.

Çак вар лирика геройне ĕмĕр тăршшĕпех ямасть. Сунтал геройĕ хыçĕнче эпир пин-пин ача кăмăлне, пурнăç пуçламăшне куратпăр, ма тесессĕн «Мĕн çуралнăранпах ĕне-вырăх çитернĕ Курăк шăтса тухсанах... Унтах çырлине те пуçтарнă, Савăннă пуль çавăнтах». Унтан та ытла, пирĕн халăх шăпи ĕмĕрлĕхех çырмапа çыхăннă пулмалла. Тĕрĕсрех каласан: чăваш пурнăç тăршшĕпех çав вартан тухас тесе чакаланать. Кунта – туглă пылак çырлапа вăй кĕртекен сив çăлкуçпа пĕрлех: «мăнтарăн» чăвашĕн синкерлĕ ĕмĕрĕ те.

«Çырмари Сизиф» (лирика геройĕ) шăппăн, шăла çыртса, никампа вăрçăнмасăр «хăйĕн» чулне кăларнă пек эпир хамăрăн шап-шур чула кăларатпăр. Кăларатпăр та кăларатпăр...

Ильина-Ефремова Н.Г.

# ТУПМАЛЛИ

Сăвăсем..........................................................................3
Михаил Сунталăн пултарулăх тĕнчи........68

ЖЕЛТОВ МИХАИЛ ПАВЛОВИЧ

Белый камень

Стихи